Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 СЕНТАБЕР 10 ШАМАТКУН 209 (5022) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорĕсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Чукунçул строителствинчи стахановла çирĕмкунлăх

Пайан Канаш — Шупашкар чукунçул строителствинче чукунçула вăхăтра туса пĕтерсе вăхăтлăх експлоатацине памала тăвас тĕлĕшпе стахановла çирĕмкунлăх пуçланать. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обкомĕ рабочисемпе колхозниксен пуçарăвне ырласа чукунçул строителствинчи стахановла çирĕмкунлăх иртермеле туса, чукунçул çинче ĕçлекен пĕтĕм рабочисене, инженерлă-техникăлă работниксене, пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене, коммуниссемпе комсомолĕцсене стахановла çирĕмкунлăха хастарлăн хутшăнса ĕçлеме чĕнчĕç.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕн чĕнĕвне чукунçул строителствинчи рабочисен коллективĕ тата колхозниксен масси пысăк хаваслăхпа йышăнса илчĕç. Рабочисем куллен-кун ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем строителствăра ĕçлеме пысăк хастарлăхпа массăлăн туха пуçларĕç. Стахановла йухăм сарăлсах пырать.

Строителствăра ĕçлекен кашни рабочи стахановĕц пуласшăн, кашни стахановĕц пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлесшĕн тăрăшать. Пĕрремĕш участкăри камĕнщик-стахановĕц Иван Кузнецов йулташ ку таранччен нормăна 200 процент тултарса ĕçленĕ пулсан, çентаберĕн 7-мĕшĕнче 300 процент тултарнă. Çав участкăрах водопровод хывнă çĕрте ĕçлекен Абдулманов йулташ бригади нормăна ытлашшипех тултарма пуçларĕ. Унăн бригадинче ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Бригадăна 5 звенона уйăрнă. Кашни звено ăмăртса ĕçлет. Бригадăра кулленхи ĕç итогĕсене кăтарту хăми çине çырса пыраççĕ.

Колхозниксем чукунçул строителствинче ĕçлессине хăйсен хисеплĕ ĕçĕ вырăнне хураççĕ. Колхозниксем чукунçул строителствинче ĕçлеме й ы ш л ă н тухаççĕ. Шупашкар районĕнчи Йанашкасси йал çамрăкĕсем строителствăра ĕçлеме йатарласа бригадă организацилесе тухнă. Бригадир Ольгă Çеменовă çирĕмкунлăх вăхăтĕнче нормăна 150 процент тултарса пыма пулчĕ пулсан, вăл хăйĕн сăмахне малтанхи кунсенчех пурнăçлама тытăнчĕ. Опукассинчен пынă ватă колхозниксем: К. Федотăвпа Н. Зубковă нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Федотăв йулташ: епĕ чукунçула туса пĕтерсе хута йарăччинех ĕçлетĕп, тет. Кунашкал тĕслĕхсем ытти участкăсенче те сахал мар.

Рабочисемпе колхозниксен активлăхĕ, пултарулăхĕ пысăк. Партипе комсомол тата профсойуз организацисен, строителствă руководителĕсен, инженерла-техникла работниксен вĕсен активлăхĕпе пултарулăхне организацилесе йертсе пырас пулать.

Строителствă руководителĕсен, инженерсен, техниксен, маçтăрсен кашни рабочи валли стахановла ĕçлеме ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилемеле, механисăмсене тĕрĕс вырнаçтарса тухса, вĕсемпе туллин усă курмала.

Инструмĕнтсемпе ĕçхатĕрĕсене тата ытти строителствă материалĕсене çителĕклĕ тăратмала тăвас пулать. Кашни рабочи кулленкун хăйĕн ăçта, мĕн-мĕн тумалине çинчен пĕлсе тăтăр. Апла тума çирĕп график кирлĕ. График вăл ĕçе тĕрĕс илсе пымали инструмент пулмала.

Анчах стахановла çирĕмкунлăха хатĕрленессин малтанхи кунĕсем строителствă управлени руководителĕсем çакна ăнланса илменни çинчен калаççĕ. 1-мĕш участкăра пайанхи куна çитсе те графика рабочисем хушшинче сÿтсе йавма мар, ăна туман та. Ку ĕнтĕ строителствă управлени стахановла çирĕмкунлăха пĕтĕм ответлăха туйса хатĕрленменни çинчен калать. Çакăн пек ответсăрлăх, йĕркесĕрлĕх стахановла çирĕмкунлăхра пулмала мар.

Канаш—Шупашкар чукунçулне туса пĕтерсе вăхăтлăх експлоатацине памала тăвассине çак кунсенчи, стахановла çирĕмкунлăхри ĕçсем татса параççĕ. Çирĕмкунлăх хушшинче лини çине хăйăр сарса çитермеле, çĕр ĕçĕсене туса пĕтермеле, шыв тăратас, електростанцисем тăвас тата ытти тĕп ĕçсене туса пĕтермеле. Вăл ĕçсене тума чукунçул строителствинче ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулни кирлĕ. Стахановла çирĕмкунлăха хатĕрленнĕ вăхăтри ĕçсем строителствăра ĕç вăйĕ çаплах улшăнса тăни çинчен калаççĕ. Партипе Совет организацисем, çавăн пекех строителствăри организацисем те чукунçул çине ĕçлеме тухакан колхозниксене строителствăра нумай вăхăта çирĕплетсе хăварас тĕлĕшпе политикăлă-массăлă ĕçе кирлĕ пек сарса йаман. Çавăн пирки час-часах строителствăна организацилĕн тухнă колхозниксем те пĕр-икĕ кун ĕçленĕ хыççăн пăрахса кайнисем пулаççĕ. Строителствă управленин чукунçул çине ĕçлеме пыракан колхозниксемпе, йединоличниксемпе договăр туса, ĕç вăйне нумай вăхăта çирĕплетмеле.

Пур рабочисене те социалисăмлă ăмăртăва хутшăнтармала, стахановла йухăма массăлă йухăм тумала. Стахановĕцсем çине лайăхрах пăхмала, вĕсене йалан пулăшса, вĕрентсе пымала. Çапла тусан çеç стахановла çирĕмкунлăх пысăк çитĕнÿсем пама пултарать.

Рабочисем, инженерсем, техниксем, колхозниксемпе колхозницăсем, коммуниссемпе комсомолĕцсем стахановла çирĕмкунлăха хастарлăн хутшăнăр, Канаш—Шупашкар чукунçулне октаберĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерсе ăна вăхăтлăх експлоатацине памала тăвар!

Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕ 1938 çулти августăн 21-мĕшĕнче „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" йышăннă саккун тăрăх Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Лашалă уйрăм хуçалăхсенчен илмели налог ставкине уйрăм районсем тăрăх çакăн пек тăвас:

Районсем	Пĕр лашашăн	Пĕр пусран ытларах кашни лашашăн
1-мĕш группă		
Елĕк	400 тенкĕ	700 тенкĕ
Куславкка	400 „	700 „
Хĕрлĕ Чутай	400 „	700 „
Тутаркас	400 „	700 „
Трак	400 „	700 „
Вăрмар	400 „	700 „
Çĕрпÿ	400 „	700 „
Шăхасан	400 „	700 „
Шăнкăртам	400 „	700 „
Йетĕрне	400 „	700 „
Йĕлчĕк	400 „	700 „
Тăвай	400 „	700 „
2-мĕш группă		
Улатăр	500 тенкĕ	800 тенкĕ
Патăрйел	500 „	800 „
Вăрнар	500 „	800 „
Йĕпреç	500 „	800 „
Ишлей	500 „	800 „
Канаш	500 „	800 „
Кувакинă	500 „	800 „
Сĕнтĕрвăрри	500 „	800 „
Пăрачкав	500 „	800 „
Турхан	500 „	800 „
Шупашкар	500 „	800 „
Шăмăршă	500 „	800 „
Çĕмĕрле	500 „	800 „

2. Районсенчи ĕçтăвакан комитетсене тата йалсовечĕсене уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен йышăннă саккуна халăха ăнлантарса пама, лашалă уйрăм хуçалăхсене пĕтĕмĕшпех учота илсе тухма, налога тĕрĕс те вăхăтра шутласа хума тата тÿлевсене срукра пухмала тума хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ **Ф. АРТЕМЙĔВ.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн **В. ЛЕБĔДĔВ.**

Шупашкар хули, 1938 ç. çентаберĕн 5-мĕш.

Çамрăксем укçа-тенкĕ пухас ĕçре

Тутаркас районĕнчи „Çĕнĕ çул" колхозри комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксем йалсовета ĕçре лайăх пулăшса пыраççĕ. Вĕсем çĕнĕ займа сарнă чухне хастарлăн ĕçлерĕç. Пĕр комсомолĕцсем кăна 1000 тенкĕлĕх ытла займ сарнă.

Комсомолĕцсем налог агĕнтне укçа-тенкĕ пухнă çĕрте хытă пулăшаççĕ. Колхоз председателĕ Богданов лайăх ĕçленипе займ укçине пĕтĕмпех (1375 тенкĕ) тÿлесе татнă. Çак шутран займ уполномоченнăйĕ А. Адамов хăй пĕччен 600 тенкĕ пухрĕ. „Çĕнĕ çул" колхозри колхозниксем йалхуçалăх налогне те тата ытти парăмсене те вăхăтра тÿлесе тăраççĕ.

Анчах та ку йалсоветри „Париж Коммунĕ" колхозра укçа-тенкĕ пухасси йулса пырать. **М. Исайĕв.**

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Совет Сойуз Геройĕ П. И. Пумпур йулташ Шупашкарта

Хĕрлĕ плошчĕтри митинг

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ — Мускав Çар округĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕ-Совет Сойузĕн Геройĕ ПЕТР ИВАНОВИЧ ПУМПУР йулташ Шупашкара килнĕ йатпа ĕнер, çентаберĕн 9-мĕшĕнче, Хĕрлĕ плошчĕтре хулари ĕçсыннисен пысăк митингĕ пулса иртрĕ. Митинга 10 пин çын ытла пуçтарăннă. Плошчĕтре çĕршер хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ, демонстрантсем çулпуçсен портречĕсене çĕклесе пыраççĕ.

Трибунă умне Шупашкар гарнизонĕнчи красноармейĕцсем, учлотсем пырса тăраççĕ.

Демонстрантсем хушшипе ССРС, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутачĕсемпе пĕрле Пумпур йулташ трибунă патне пынă вăхăтра, хĕрлĕ плошчĕт тăвăллăн алă çупнипе, „урра" кăшкăрнипе кĕрлесе кайать.

Парти хула комитет çекретарĕ Лапин йулташ митинга уçса, Пумпур йулташа сăмах парать. Плошчĕт каллех çĕнĕ вăйпа йанраса кайать: Халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа чысласа, вăл пăхса ÿстернĕ герой-лотчиксенĕ чысласа „урра" кăшкăраççĕ, оркестр „Интернационал" вылять.

Пумпур йулташ чи малтанах Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсенчи лотчиксемпе техниксен йачĕпе саламлать. ССРС Верховнăй Совет депутатне суйласа пысăк чыс тунăшăн тавтăвать, вăл, Верховнăй Совет депутачĕ пулнă май, хăйĕн пĕтĕм вăйне тăван çĕршывшăн пама пулать. — Иртнĕ çулти нойабĕр уйăхĕнче Чăваш республикне килейменшĕн каçару ыйтатăп, — тет Пумпур йулташ,-унчухне епĕ партипе правителствă заданине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçленĕ пирки йерçеймерĕм.

Унтан Пумпур йулташ ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен калать. Государствăн 1938 çулти бÿджетĕнчен çĕршыв оборони валли 27 мĕлйард тенкĕ укçа уйăрса пани çинчен пĕлтернине митинга пухăннă халăх алă çупса „урра" кăшкăрса кĕтсе илет. Çавăн пекех Хасан кÿлли районĕнче пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар Йапони провокатăрĕсене аркатни çинчен каласан та, митинг Хĕрлĕ Çара, Сталин йулташа чысласа тăвăллăн алă çупать.

Йулашкинчен аероклуб учлочĕсен йачĕпе АНДРИАНОВ йулташ хĕрÿлĕ сăмах тухса каларĕ.

Пĕр-ик кунтан Пумпур йулташ хăйĕн суйлавçисем патне. Вăрнар суйлав округне тухса кайать.

Мускав Çар Округĕн тактикăлă вĕренĕвĕсенче пулнă чаçсен парачĕ

ВĔРЕНÿСЕН РАЙОНĔ, çентаберĕн 8-мĕш. (ТАСС). Н. хулинчен темиçе километрта сарăлса выртакан аслă хирте Мускав Çар Округĕн тактикăлă вĕренĕвĕсене хутшăннă чаçсен пысăк парачĕ пулнă.

Парада таврари районсенчен вуншар пин ĕçсыннисем пынă. Хăйсем Хĕрлĕ Çарпа пĕрлешсе тăнине, партипе правителствăна, йуратнă çулпуçне Сталин йулташа парăннине халăх лозунгсенче, плакатсенче, йурăсенче кăтартать. Колоннăсен çийĕпе темĕн чухлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ, пур çĕрте те партипе правителствă руководителĕсен портречĕсем курăнаççĕ.

Парадра Мускав Çар Округĕнчи çарсен командуйушчийĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ С. М. Буденный йулташ йышăнать.

Çарсем тавра çаврăнна хыççăн, Мускав Çар Округĕнчи çарсен командуйушийĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ Буденный йулташ Мускав Çар Округĕн Çар Совечĕн членĕсем—ПСК(б)П Мускав комитечĕпе Мускав хула комитечĕн çекретарĕ Угаров йулташ тата дивизионнăй комиссар Запорожец йулташ тăракан трибунăçине хăпарать.

Совет Сойузĕн Маршалĕ Буденный йулташ тактикăлă вĕренÿсен итогĕ йачĕпе кĕске митинг уçать.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ

Çентаберĕн 7-мĕшĕнчи каçхи ларура социаллă страховани совечĕсен ĕçĕсем çинчен Ленинградри Киров йачĕпе тăракан „Електросила" савăтри савăт комитечĕн председателĕ Скоробогатко йулташ тата Мускаври атă-пушмак тăвакан „Буревестник" хапрăкри хапрăк комитечĕн председателĕ Диссон йулташсем докладсем тунă.

„Електросила" савăтри рабочисенчен, инженерла-техникла работниксенчен тата служăщисенчен кашни тăваттăмĕш çынăн кашни çулах канмалли çуртра, санаторинче пулма май пур.

Икĕ докладчик те рабочисене предприйатисенче медицинă пулăшăвĕ парассине кирлĕ пек организациleме пултарайман сывлăха сыхлав оргăнĕсене тивĕçлĕн критикленĕ.

Çентаберĕн 8-мĕшĕнчи ирхи ларура социаллă страховани совечĕсен ĕçĕсем çинчен Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп совечĕн социаллă страховани пайĕн пуçлăхĕ Котляр йулташ содоклад тунă.

Çакăн хыççăн докладсем тăрăх прենисем пуçланнă.

Пренисенче тухса калаçнисем Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне предприйатисенче медицинăлă пулăшу парассине хакламаншăн тата страховой врачсен ĕçĕсене йăпăх контрол тунăшăн хытă критикленĕ.

(ТАСС).

Тÿтайĕв тата Калашниковăв лотчиксене премилени

МУСКАВ, 8. Граждан сывлăш флочĕн тĕп управлени начальникĕ В. С. Молоков йулташ йатарласа кăларнă приказра М. И. Тÿтайĕв лотчик тата В. Д. Калашников бортмеханик Мускав—Владивосток—Мускав маршрутпа хăвăрт вĕçессине чаплăн пурнăçа кĕртнипе палăр тунă.

Тÿтайĕв тата Калашников йулташсене тавтунă. Вĕсенчен кашнине уйăхри ĕçукçипе премиленĕ.

Çавăн пекех Краснодар аероклубĕн начальникне Неустройĕв йулташа та, Тÿтайĕв йулташ вĕçевĕ вăхăтĕнче аеродрома лайăх хатĕрленĕшĕн тавтунă.

Малта пыракан налог агĕнчĕсем РСФС Республикĕнчи райфинпайĕсен налог агĕнчĕсене пурне те

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Йулташсем!

ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ ССР Сойузĕн 1938 çулта пĕтĕм государствă бÿджечĕ çинчен йышăннă саккунра ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти оргăнĕсем 1937 çулта саккунпа пăхнă йалти налогсемпе тĕрлĕ тÿлевсене шыраса илессине çителексĕр туса пынине палăртрĕ тата ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти оргăнĕсен ĕçне лайăхлатмала тума хушрĕ.

Епĕр, налог агĕнчĕсемпе инспектăрсем, РСФСР Финанс Халăх Комиссариатне пухăнса хамăр ĕç результачĕсене сÿтса-йавнă хыççăн, йалхуçалăхĕ хушшинче налогсемпе тĕрлĕ тÿлевсене пухас ĕç 1938 çулта та çителĕксĕр пынине палăртатпăр.

Йалхуçалăх налогĕ, культсбор тата окладлă страховани йенĕпе пухмали йулнă укçана халĕ те пухса пĕтермен-ха. Уйрăманах йединоличникла хресченсем хушшинче пухмали нумай йулнă. Налогсем йенĕпе пулнă парăма пухасси чăтма çук йăпăх пынипе пĕрлех, кăçалхи çулшăн йалхуçалăх налогĕпе окладлă страховани пухасси те çителексĕр пырать.

Çаксем ĕнтĕ нумай налог агĕнчĕсемпе инспектăрсем çителĕксĕр ĕçленине вырăнти финанс оргăнĕсен руководителĕсем кирлĕ чухлĕ оперативлăхпа йертсе пыманнине тата чылай финанс оргăнĕсенче дисциплинă çуккине пĕлтереççĕ.

Çапах та, пирĕн хушăра лайăх пахалăхпа ĕçлекен отличниксем те сахал мар. Сăмахран, Орджоникидзе крайĕнчи Либкнехтовски районри налог агĕнчĕ Плис йулташ. Вăл лайăх организатăр, ĕçе туса çитерсен çеç лăпланать. Плис йулташ июлĕн 1-мĕшĕнче районри финанс пайĕнчен хăйсен парăмĕсене тÿлесе татман 105 çынна кĕртнĕ списока илчĕ. Июль уйăхĕ пĕтнĕ çĕре çав парăмсене пĕтĕмпех пухса пĕтернĕ.

Краснодар крайĕнчи Адыгей автономлă облăçĕнче налог агĕнчĕ пулса Теучеж йулташ ĕçлет. Вăл 1938 çулта налогсемпе страховани тÿлевĕсем йенĕпе укçа пухас тĕлĕшпе хăй çине хунă задачăна срукченех пурнăçларĕ.

Ростов облăçĕнчи Сальски районĕнчи налог агĕнчĕ Фоменко йулташ августăн 1-мĕш тĕлне пĕлтĕрхи парăмсене пĕтĕмпех пухса пĕтернĕ тата срук çитиччĕнех çак çулшăн пур тÿлевсем йенĕпе те укçа пухас ĕçе тытăннă.

Плис, Теучеж тата Фоменко йулташсем пек отличниксем кашни крайра, облăçра, Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикра пур, анчах та вĕсен ĕç опытне ытти çĕре сарма тата вĕсем пек ĕçлеме тăрăшмаççĕ. Пур налог агĕнчĕсем те партин налог политикине йалсене тивĕçлипе, большевикла пурнăçласа пымаççĕ-ха, çакна пула ĕнтĕ хăйсем умне лартнă задачăна пурнăçлаймасăр тăраççĕ.

Пухса пĕтермесĕр йулнă парăма пухасси начар пыни вăл тепĕр йенчен тата районсенчи финанс пайĕсен заведуйушчийĕсем, налог тата страховани инспектăрĕсем пур те агĕнтсене ĕçре кирлĕ пулăшăва парса пыманнинчен килет.

Йулташсем! ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Çессийĕ ССРС Финанс Халăх Комиссариатне тата унăн вырăнти оргăнĕсене çавăн пекех пирĕнпе сире те хамăрăн ĕçе лайăхлатассишĕн пур майсемпе те усă курма хушрĕ.

Епĕр Верховнăй Совечĕн Çессийĕ йышăннине кĕске вăхăтра пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ, çавăнпа та налог тÿлевĕсене пухассине кăтартулă туса пымала тата халăх хушшинче налога тÿлес йенĕпе пысăк дисциплинă тумала. Çав тĕлĕшпе епĕр çакăн пек задачăсем кăларса тăрататпăр:

1) Йалхуçалăх налогĕ, культсбор тата окладлă страховани йенĕпе пулнă парăма çентаберĕн 15-мĕшĕнчен кайа йулмасăр пĕтĕмпех пухса пĕтерес, 1938 çулта шута илсе хунă йалхуçалăх налогĕпе окладлă страховани тÿлевĕсене срук çитиччĕнех пухас, йединоличник хуçалăхĕсен лашисем çине хунă налога тата „Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займ" укçине вăхăтра пухса çитермеле тăвас.

2) Хамăр участкăра налок тÿлекен кашни хуçалăха сăнаса пĕлес, кашни йединоличникăн тупăш ăçтан килнине пĕлсе тăрас, тÿлевсем тăрăх укçа килнине вăхăтра тата тĕрĕс учота илсе пырас.

3) Налог ĕçĕнче пĕр майах пулăшса пыракансем пулма хамăр тавра финанс активĕсене организацилес, колхозсен пухăвĕсенче, колхозниксемпе тата йединоличниксемпе уйрăммăн калаçнă чухне те налогпа страховани тÿлевĕсене вăхăтра парса татасси кашни совет гражданинĕн государствăлă обйазăннăçĕ пулса тăни çинчен пĕр майах ăнлантарса парас.

4) Районри финанс пайĕ çумĕнчи çеминарсене уйăхра икĕ хутран кайа мар çÿресе политикăлă пĕлĕве тата ĕç квалификацине ÿстерес.

5) Халăх хушшинче ăнлантару ĕçне лайăх туса пырас тĕлĕшпе хамăр участкăри финанс активисĕсем хушшинче социалисăмлă ăмăрту ĕçне организацилес. Йулса пыракан налог агĕнчĕсене ĕçре йулташла пулăшу парса пырас.

6) Революцилĕ сыхăлăха йалан хăпартса пырса, налог законодателствине пăсса ĕçлеви пачах та пулмала мар тăвас.

Хамăр çине çак обйазателствăсене илсе, епĕр республиксенчи, крайсенчи, облăçсенчи финанс оргăнĕсен руководителĕсенчен, районсенчи финанс пайĕсен заведуйушчисенчен, налог тата страховани инспектăрĕсенчен лайăхрах йертсе пыма, ĕçре пĕр майах пулăшма, политикăлă пĕлеве тата ĕç квалификацине ÿстерессишĕн тăрăшма ыйтатпăр.

Епĕр РСФСР-чи мĕн пур налог агĕнчĕсене социалисăмлă ăмăртăва тухма чĕнсе, йалсенче налогпа страховани ĕçĕсене кĕске вăхăтрах лайăхлатма чĕнетпĕр.

Верховнăй Советăн Çессийĕнче пĕтĕм государствăн 1938 çулхи бÿджетне 132 мĕлйард тенкĕлĕх йышăнни Совет Сойузĕн вăйĕ пысăккине, социалисăм строителствин пур участкисенче те ăнăçлă ÿсĕмсем пулса пынине пĕлтерет.

Çак çитĕнÿсене—етемлĕхе çĕнерен империалисăмла вăрçăна туртса кĕме хăтланакан, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывĕ çине—ССРС çине вăрçăпа тапăнма хатĕрленекен фашисăма сутăннă троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла тискер халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе пынипе тунă.

Финанс çистеминчи работниксен хамăр çĕршыв коммунисăм патне пымали пысăк программăна тултарас ĕçе, социалисăм строителствине малашне те сарса пыма 132 мĕлйард тенкĕ укçа пухассине пурнăçламала.

Финанс работникĕсен çарĕ коммунисла парти тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ Аслă Сталин йертсе пынипе хăй умне лартнă задачăна пурнăçлама тивĕçлĕ.

Канашлу хушнипе—налог агĕнчĕсем:

Гордейĕвă, Аннă Михайловнă—Мускав облăçĕнчи Йегорьевски районĕнчи Алферовски йалсовечĕ.

Теучеж, Махмуд Меджидийĕвич—Краснодар крайĕнчи Адыгей Автономлă облăçĕнчи Едепокайĕвски йалсовечĕ.

Глинский, Николай Çергейĕвич—Ростов облăçĕнчи Глубокински районри Карпорусски йалсовечĕ.

Голуновă, Анастаçийа Ивановнă—Горьки облăçĕнчи Шатковски районри Озерски йалсовечĕ.

Фоменко, Степан Йаковлĕвич—Ростов облăçĕнчи Сальски районри Ново Манически йалсовечĕ.

Бурйак, Павел Иванович—Краснодар крайĕнчи Приморско Ахтарски районри Степной йалсовечĕ.

Богданов, Дмитрий Никифорович—Ленинград облăçĕнчи Лужски районри Бетковски йалсовечĕ.

Плетнев, Тимофей Федорович—Сталинград облăçĕнчи Неткачевски районри Смородински йалсовечĕ.

1938 çулти, августăн 26-мĕшĕ, Мускав хули.

ПРИМОРСКИ 1-мӗш ҪАР БОЙЕЦӖСЕН ПАТТӐР ӖҪӖСЕМ

Нумайах пулмасть пӗтӗм ҫӗршыв Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Хӗрлӗ йалавлӑ фронтӑн Приморски 1-мӗш ҫарӗн мухтавлӑ бойецӗсен командирсемпе политработниксен Хасан кӳлли районӗнчи паттӑр кӗрешӗвне тимлӗн сӑнаса тӑчӗ.

Йапонин пӳтсӗр военщинине, йура нӑ тӑван ҫӗршывӑн таса чиккисене пырса тӗкӗннӗскерсене, калама ҫук хыттӑн ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйне, унӑн авиацийӗн, артиллерийӗн, танкӑсен, стрелковӑй чаҫӗсен вӑйне пӗтӗм тӗнче курчӗ. Хӗрлӗ бойецсен, социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывӑн шанчӑклӑ ывӑлӗсен хӑйулӑхӗпе паттӑрлӑхне тата вӗсем хӑйсене пӗр шеллемесӗр ҫапӑҫнине пӗтӗм тӗнче курчӗ.

Хасан кӳлли патӗнче ҫапӑҫусем пынӑ кунсенче вӑрҫӑ ӗҫӗсем пынӑ ҫӗрте красноармейӗцсен „На защиту родины" йатлӑ хаҫачӗ тухса тӑчӗ. Айалта пичетленекен стайасемпе заметкӑсене чылайӗшне ҫав хаҫатран илнӗ. Красноармейӗцсем, командирсем тата политработниксем ҫырнӑ стайасемпе заметкӑсем пирӗн чӗресене тӑван ҫӗршыва йуратас туйӑмпа, унӑн мухтавлӑ, ӑна паттӑрӑн хӳтлекенсемпе мухтанас туйӑмпа тултараҫҫӗ.

Заозернайа сопкӑ ҫинче хӗрлӗ флаг ҫӗнӗрен вӗлкӗшме пуҫларӗ

Пирӗн бойецсем ҫапӑҫӑва мӗнле хастарлӑхпа кӗрсе кайнине сӑмахпа каласа пама та йӑвӑр. Ирсӗр провокацишӗн Йапонин фашисла сволӑчӗ йунпа ответ тытмала, пуҫӗпе сапламала пулать. Ҫакӑн пек ҫирӗп решенипе епӗр пӳрте, рйадовой бойецран пуҫласа аслӑ командир таранах, партире тӑракан тата партире тӑман бољшевиксем, Заозернайа высота ҫине атакӑна кайрӑмӑр, унта шӑтӑксемпе ҫурӑксенче пӳтсӗр провокатӑрсем—йапонӗцсем ларнӑ.

Сољанных йулташ чаҫӗнчи подразделенисем хушшинче тӑшман ҫине тимлӗн те татӑклӑн наступлени тӑвас тӗлӗшпе ӑмӑрту саралса кайрӗ.

Заозернайа высота ҫине никамран малтан флаг хӑпартса лартас тесе, Степкинский йулташ подразделенийӗ наступленине хӗрлӗ флагпа кайрӗ.

Атакӑ пуҫланиччен флага епӗ ҫӗклесе пытӑм, анчах тӑшман снарйачӗ мана амантрӗ. Флага ҫав подразделенинчи бойецсемех йарса илчӗҫ.

Ҫак татӑклӑ сехетре пирӗн ҫапӑҫу техники ӗҫлеме пуҫларӗ. Пирӗн артиллери тӑшманӑн персе тӑракан вырӑнӗсене пӗрин хыҫҫӑн теприне ҫӗмӗре-ҫӗмӗре тӑкрӗ. Пирӗн авиаци хӑйӗн ӗҫӗсемпе йапонӗцсене хӑйсен позицийӗсенчен пӑрахса тухса тарма пикентерчӗ. Пирӗн авиаци бомбӑсем пӑрахса ҫӗмӗрнӗ вӑхӑтра пӗтӗм Заозернайа высоти тӗтӗмлӗ те тусанлӑ пӗлӗтпе витӗнсе ларчӗ.

Пирӗн авиаци отличнӑ ӗҫлени бойецсен хастарлӑхӗпе хӑйулӑхне ҫӗклентерчӗ. Пирӗн шиксӗр танкиссем тӑшман точкисене пӗрин хыҫҫӑн теприне таптаса лапчӑтрӗҫ. Пирӗн шухӑ тачанкӑсем пулеметсемпе ҫиҫсе иртрӗҫ, вара пехотӑ тӑшман ҫине тӑрӑнчӗ. Ҫав вӑйа никам та аркатма пултарайман.

Хӑйулӑ командирсем, комиссарсем тата политработниксем бойецсене тӑшман ҫине наступлени тума йертсе кайрӗҫ. Хӑйсен примерӗпе тата хӑйсен социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывне иксӗлми йуратнипе вӗсем хӑйсен подразделенийӗсене наступленине илсе кайрӗҫ. Командира амантсан йе вӗлерсен, политрук сасси йанраса кайать: „Итлӗр манӑн командӑна, ротӑ малала!"

Августӑн 6-мӗшпе 7-мӗш хушшинче ҫӗрле хӑйаррӑн ҫапӑҫса, пирӗн ҫарсем Заозернайа высотана йышӑнса илчӗҫ.

Спинкин йулташ подразделенийӗ хӗрлӗ флаг хӑпартса лартрӗ.

Хӗрлӗ Ҫар, пӗтӗм совет халӑхӗ пирӗн социалисӑмлӑ ҫӗр ҫине ура йарса пусма никама та ирӗк парас ҫук—ҫакна тӑшмансем пӗлсе тӑччӑр.

Епӗр ҫапӑҫӑва пӗтӗм етемлӗхӗн аслӑ та ӑслӑ ҫулпуҫӗн Сталин йулташӑн йалавӗпе кайрӑмӑр, унӑн йалавӗпе епӗр тӑшмана ҫӗнтертӗмӗр.

Манӑн суран тӳрленсен, епӗ каллех хамӑн подразделени пуҫне тӑрса атакӑна, Йапони захватчикӗсене хирӗҫ ҫапӑҫӑва хавасланса кайатӑп. Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене вилӗм!

Политрук Н. Аникин.

„На защиту родины" хаҫат. №-2, 1938 ҫ. августӑн 8-мӗш.

Сталин йатне асра тытса атакӑна кайрӑмӑр

Ҫӗрле ҫӳлӗ курӑксем хушшинче чӑштӑртатнӑ сасӑ илтӗнсе кайрӗ. Кусем Йапони наљотчикӗсем, чикӗ урлӑ каҫса, пирӗн ҫӗр тӑрӑх шӑвӑнса килеҫҫӗ.

Ҫапӑҫулӑ лейтенантӑн Тережкин йулташӑн ҫирӗп сасси шӑвӑнса килекен ҫӗлен-калтасем ҫине штыкпа тухма мӗн пур бойецсене ура ҫине тӑратрӗ.

Сопкӑсем ҫинче тӑшманпа хӗрӳлӗн тытӑҫса ӳксен, Совет тӑван ҫӗршывӗн чысӗшӗн хӑйулӑ ӗҫ тума чӗнекен пирвайхи йахрав йанӑраса кайрӗ.

Тережкин йулташ командӑ парӗ:

— Сталин йулташшӑн—малала!

Бойецсем малала ыткӑнчӗҫ, красноармейӗцла „урра" йанӑрарӗ.

Хайар, креслӑ тытӑҫу пулчӗ. Отделени командирӗ Никӑн Шишлов хирe-хирӗҫ тӑрса алӑ вӗҫҫӗн ҫапӑҫнӑ чухне Йапони офицерӗ ҫине пырса тӑрӑнчӗ. Йапони офицерӗ револљвере совет патриочӗ ҫине тӗллерӗ. Шишлов йулташ хӑраса ӳкмерӗ, сулахай аллипе тӑшман аллинчен йарса тытрӗ, офицера чышкӑпа ҫапса ӳкерчӗ, унран револљверне туртса илчӗ те, тӑшмана персе вӗлерчӗ.

Шишлов йулташпа пӗрле унӑн йулташӗсем совет тӑван ҫӗршывӗшӗн ҫапӑҫрӗҫ, вӗсем ун пекех ҫулӑмлӑ патриотсем, совет халӑхӗн хӑйулӑ та шиксӗр ывӑлӗсем.

Сталин йулташшӑн, малала!—тесе кӑшкӑракан ҫапӑҫулӑ чӗнӳ—пирӗн ҫӗнтерӳ йалавӗ, пирӗн девиз.

Стрелковӑй полкри красноармейӗц-гранатометчик Ваҫилий Шадрин.

„На защиту родины" хаҫат. № 1, 1938 ҫ. августӑн 7-мӗш.

Комсомолӗцсем тӗлӗнмеле хӑйулӑх кӑтартрӗҫ

— Самурайсен провокацине ответлесе епӗ ленинла комсомола илме зайавлени патӑм. Ҫапӑҫӑва кӗрсенех, йулашки йун тумламӗ йулмиччен самурайсемпе ҫапӑҫӑп,—ҫавӑн пек каларӗ подразделени митингӗнче пулеметчик Костышӗв йулташ.

Хӑйӗн сӑмахӗсене вӑл тӳрре кӑларчӗ. Костышӗв йулташ пулеметран тӗрӗс персе тӑрса, атакӑна кайакан подразделенине пулӑшса тӑчӗ. Унӑн пулемечӗ ҫав тери тӗл тивретнипе самурайсене ҫавапа ҫулнӑ пек ҫулса тӑкрӗ.

Взводри кӗҫӗн командир комсомолӗц Тренев йулташ, ҫапӑҫу пулаччен малтанхи кун ҫеҫ комсомола кӗнӗскер, амансан ҫапла каларӗ:

— Тӑшмансене татах та ытларах вӗлерсе пӗтерме епӗ каллех таврӑнӑп-ха,—терӗ.

Чи лайӑх комсомолӗц красноармейӗц Родинӑв йулашки йун тумламӗ йулмиччен ҫапӑҫрӗ.

Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫнӑ чухне пирӗн баталљонри комсомолӗцсем тӗлӗнмеле хӑйулӑх кӑтартрӗҫ.

Комсорг ГЛУХӐВ.

„На защиту родины" хаҫат. № 10. 1938 ҫ. августӑн 16-мӗш.

15 красноармейӗц 50 самурайа пӗтерсе хунӑ

Пирӗн территори ҫине тапӑнса кӗрсе, Йапони бандичӗсем васкавлӑн окопсем туса пытаннӑ, окопсем чавнӑ, пралук картасем тытнӑ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн регуљарлӑ чаҫӗсем советӑн хӑйулӑ пограничникӗсене пулӑшма пырсан, наступлени тума приказ илнӗ. Пирӗн батарейа ҫакӑн пек приказ панӑ: самурайсен пулемечӗсене ҫӗмӗрсе тӑкмала та, артиллерирен персе тӑрса сулахай флангра хамӑр ҫарсене наступлени тума пулӑшмала.

Епӗр персе тӑмали позици йышӑнтӑмӑр та, ҫапӑҫу хирне сӑнаса тӑма пуҫларӑмӑр, хамӑр персе тӑракан ҫектӑрта йапонӗцсен ҫичӗ пулеметне часах куртӑмӑр.

Самурайсене пӗтерсе тӑкма оруди командирӗ Йакимӑв чи малтан задачӑ илет. Унӑн пӗрремӗш снарйачӗ тӑшман пулеметне тивет, вара самурайсем йаланлӑхах пеме чарӑнаҫҫӗ.

Епӗ тӑшманӑн иккӗмӗш пулеметне ҫӗмӗрсе тӑкатӑп, икӗ хутчен перетӗп, снарйадсем пулемет окопӗ патӗнчех ҫурӑлса кайаҫҫӗ, ҫакӑн хыҫҫӑн пӗр самурай та чӗррӗн йулмасть.

Ҫапла, епӗр чӗнмен хӑнасен ҫиччӗ пулемет расчотне малтанхи кунах ҫапӑҫура ҫӗмӗрсе тӑкрӑмӑр, вӗсем пирӗн территори ҫинчен „Гочкис" ҫеҫ мар, хӑйсен урисене те илсе кайаймарӗҫ.

Сигемицу Мускавра мирлӗ сӗнӳ панӑ хыҫҫӑн, тепӗр кунних йапонӗцсемпе ҫӗнӗрен „тӗлпулма" тиврӗ.

Танксене хирӗҫле оборонӑна йышӑнса илсен, епӗр йапонӗцсем тунӑ засадӑна хыпаласа пӑхрӑмӑр, ҫав засадӑран вӗсем пирӗн чаҫсем ҫине пулеметран персе тӑнӑ, хӑшпӗр вӑхӑтлӑха вӗсем унта ҫирӗп вырнаҫса ларнӑ пулнӑ.

Вӗсем пирӗн батарейа командирне часах стройран кӑларма пултарчӗҫ. Командованийе епӗ хам ҫине илетӗп, тӑшман ҫине персе тӑнипе пире пулӑшчӑр тесе кашни оруди патне виҫшер ҫын хӑваратӑп та, ытти вунпилӗк ҫынна атакӑна илсе кайатӑп.

Тӗмескелӗ вырӑнсемпе усӑ курса, епӗр тӑшман траншейисем патне систермесӗр шӑвӑнса пытӑмӑр, тӑшман патне ҫитесси 7—10 метр йулсан, епӗр хӑватлӑн „урра" кӑшкӑрса атакӑ тума пуҫларӑмӑр, бандитсем ҫине гранатӑсем пере-пере тултартӑмӑр, штыксемпе тата винтовкӑ приклачӗсемпе усӑ куртӑмӑр.

„Хӑйулӑ" самурайсем хӑраса ӳкнипе ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр кайала тарма пуҫларӗҫ, анчах пирӗн артиллери кӑларса йаракан снарйадсем, пирӗн гранатӑсемпе пуљӑсем вӗсен ҫулне пӳлсе лартрӗҫ. Кунта епӗ амантӑм. Батарейа командованине оруди командирне, ПСК(б)П членӗн кандидатне Йакимӑв йулташа патӑм, вара вӗсем епӗ пуҫласа йанӑ атакӑна вӗҫлесе ҫитерчӗҫ. Пӗр бандит та чӗррӗн кайаймарӗ. Пирӗн 15 бойец 50 самурайа вӗлерсе пӗтерчӗҫ, пехотӑ валљи наступлени тума ҫул уҫса пачӗҫ.

Политрук заместителӗ КАЛИН.

„На защиту родины" хаҫат. № 9. 1938 ҫ. августӑн 15-мӗш.

Хӑйулӑ командир

Аслӑ лейтенантӑн Макҫимӑвӑн роти тӑшмансене геройла тата пӗр ҫӳҫенмесӗр ҫӗмӗрнӗ

Партин ҫамрӑк кандидачӗ Иван Казаков хӑйӗнпе мухтанман, чӑтӑмлӑ, тимлӗ бољшевик примерне кӑтартать. Тӑван ҫӗршывшӑн, тӑшмансене хирӗҫ вӑл йепле тӑрӑшса ҫапӑҫнине курма кирлӗ пулнӑ.

1938 ҫулти ийунӗн 7-мӗшӗнче Казаков Тамбӑври училищӑран вӗренсе тухнӑ, ӑна Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Хӗрлӗ йалавлӑ фронта пулемет взводӗн командирӗ туса йанӑ.

Ҫамрӑк лейтенантӑн часах Хасан кӳлли патӗнче малтанхи хут ҫапӑҫу вутӗнче пулма тивнӗ. Казаков взводне пулеметран персе, асса кайнӑ Йапони наљотчикӗсене Заозернайа сопкӑ ҫинчен хӗссе кӑларма хушнӑ.

Акӑ сопкӑ. Унӑн тӳпинче,—самурайсен окопӗсем. Стрелковӑй ротӑ командирӗ аслӑ лейтенант Макҫимӑв хӑйулӑ бойецсене сопкӑн сылтӑм флангӗнчи тӳпи ҫине йертсе кайать. Самурайсен станоклӑ пулемечӗсем пирӗн бойецсем ҫине тӑхлан ҫӑмӑрпа сапаҫҫӗ. Сылтӑм йенчен Йапони офицерӗ 60 ҫынлӑ ушкӑнпа пирӗн ҫине атакӑлама хатӗрленет.

Казаков, Маркин тата Галкин пулеметчиксемпе пӗрле пӗр самантрах высота ҫине хӑпараҫҫӗ те, окоп туса пытанаҫҫӗ. Наљотчиксем пӗререн-пӗререн йерипен малала шӑвӑнаҫҫӗ, хыҫалта офицер утса пырать.

— Огонь!—командӑ парать Казаков.

Пулемет шатӑртатма пуҫларӗ. Самурайсем ӳксе вилчӗҫ. Офицер хӑйӗн салтакӗсен виллисем ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те, йупа пек хытса кайрӗ, унтан: „Банзай!" тесе кӑшкӑрса малала ыткӑнчӗ.

— Огонь по авантюристам!—командӑ парать взвод командирӗ.

Пулеметчик Маркин темиҫе пуљӑ кӑларса йачӗ. Чӗрӗп пек хутланса ларнӑ самурайсем офицерӗпе пӗрлех вилсе выртрӗҫ.

Бандитсен пӗр ушкӑнне ҫӗмӗрсе тӑкса, Макҫимӑв роти малала куҫрӗ. Анчах сопкӑ ҫывӑхӗнче айалта наљотчиксен иккӗмӗш ушкӑнӗ курӑнса кайрӗ, унта ҫӗр ҫын та ытларах.

Казаков Маркин пулеметчика сылтӑм фланга куҫарать. Куҫса пыракан Маркин ҫине йапонӗцсем ҫӑмӑр ҫунӑ пек пуљӑ сапаҫҫӗ. Самурайсем каллех атакӑлама пуҫларӗҫ. Галкин пулемечӗ шатӑртатма пуҫларӗ, йапонӗцсем кайала чакрӗҫ.

Ҫынсем сахаллине пӑхмасӑрах, Макҫимӑв роти тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене геройла тата пӗр ҫӳҫенмесӗр ҫӗмӗрчӗ. Пулеметсем лартса пемели позицисене час-часах улӑштарни, ҫуран ҫар пӗлсе тӑвакан тимлӗ тактикӑ ӑнӑҫлӑ ҫӗнтерӳ тума май пачӗҫ. Чикӗне пӑсакансене хирӗҫ ҫапӑҫу нумайччен пычӗ. Макҫимӑв роти сылтӑм флангра тӑшмана совет ҫӗрӗ ҫинчен никамран малтан шӑлса ывӑтрӗ те, Заозернайа сопкӑ ҫине сылтӑм флангран пырса чи малтан хӗрлӗ флаг лартрӗ.

Лейтенант Казакӑв ҫапӑҫура аманнӑ пулнӑ, анчах Заозернайа сопкӑ ҫинчен йулашки самурайа тапса ҫирпӗтеччен вӑл ҫапӑҫу хирӗнчен пӑрахса кайман. Ӗҫлӗ халӑхӑн ывӑлӗ, шиксӗр, ҫамрӑк командир, бољшевикла парти ҫӗклесе воспитани панӑскер, вӑл мӗн пур вӑйӗсемпе пӗлевӗсене хӑйӗн халӑхне пачӗ, кирлех пулнӑ пулсан вӑл пурнӑҫне те параччӗ.

П. Иванов.

„На защиту родины" хаҫат. № 6. 1938 ҫ. августӑн 12-мӗш

Тӑван ҫӗршыв-аннешӗн

Наступлени ҫинчен панӑ ҫапӑҫу приказне епӗр пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илтӗмӗр. Вӑл приказа епӗр тӳсеймесӗр кӗтрӗмӗр. Пурин те пирӗн пӗр кӑмӑл пулнӑ — вӑрҫӑ провокатӑрӗсене кирлӗ таран вӗрентес те ҫийӗнчех пирӗн ҫӗре вӗсенчен тасатас.

Пире ҫапӑҫӑва ротӑ командирӗ аслӑ лейтенант Сухӑв йулташ йертсе кайрӗ. Вӑл политрукпа Катков йулташпа пӗрле малти ретсенче пулчӗҫ, хӑйсен примерӗпе пире хавхалантарчӗҫ. Епӗр наступлени тунӑ чухне пирӗн ҫине пулеметсенчен тата тупӑсенчен вӑйлӑн персе тӑчӗҫ, анчах ҫапӑҫу приказне пурнӑҫа кӗртес ҫӗрте ку пире пӗртте чӑрмантармарӗ. Ирпе епӗр сопкӑ тӳпине ҫитрӗмӗр. Тӑшман хӑраса ӳкнипе ниҫта кайма пӗлмесӗр тарчӗ.

Ҫапӑҫура бойецсем хӑйулӑхпа шиксӗрлӗх кӑтартрӗҫ. „Сталинла Конституцишӗн!", „Аслӑ тӑван ҫӗршыв-аннешӗн!"—текен лозунгсемпе тӑшмана атакӑларӑмӑр.

Пулеметчик Логунов йулташ ҫав тери паха кӗрешрӗ. Вӑл тӗл персе тивретнипе тӑшмана арканса каймалах ҫапса салатрӗ тата пире малала кайма пулӑшрӗ. Пулеметне сийен тунӑ самантра та Логунов йулташ хӑраса ӳкмерӗ. Вӑл, ҫӑмӑр пек ҫӑвакан пуљӑсем айӗнех пӑрахса хӑварнӑ пулемет патне пычӗ те, тӑшман ҫине пулеметран пуљӑсем сирпӗтме пуҫларӗ.

Ҫапӑҫура хӗрсе кайнипе, епӗ алла мӗнле амантнине те туйман. Кайран, хӗрлӗ йун пӗрӗхсе тухнине сиссен, суранланнине ӑнлантӑм.

Ҫапӑҫу хирӗнчен тухса кайнӑ чух, епӗ хама мӑнаҫлӑн та телейлӗн туйрӑм. Ирсӗр провокаци туса пире вӑрҫа туртса кӗртме хӑтланакан Йапони захватчикӗсене епӗр хамӑр ҫӗр ҫинчен хӑваласа йатӑмӑр.

Йапони самурайӗсем пирӗн ҫӗр ҫинче нихӑҫан та пулаймӗҫ. Аркатса пӑрахмалах ҫапма епӗр йаланах хатӗр.

Кӗҫӗн командир Журављов.

„На защиту родины" хаҫат. № 3. 1938 ҫ. августӑн 9-мӗш.

Пожарский военкомӑн пурнӑҫӗпе вилӗмӗ

Иван Алексейӗвич Пожарский биографийӗ простӑ, унӑн биографийӗ пирӗн халӑх ывӑлӗсен, Хӗрлӗ Ҫар бойецӗсен, командирӗсен, комиссарӗсен пиншер ытти биографийӗсем йеверлӗ.

Мордва АССР Республикинче, Ардатӑв хулинче ҫуралнӑ. Рабочи ывӑлӗ. Вӑл 12 ҫулхи ача чухнех ашшӗпе пӗрле вӑрман хатӗрлевӗнче ӗҫленӗ, унтан виҫӗ ҫул хушши атӑ-пушмак мастерскойӗнче: малтан ученик, кайран маҫтӑр пулса ӗҫленӗ.

1922 ҫулта ҫамрӑк комсомолӗца Иван Пожарскине ҫимӗҫ фронтне мобилизацилеҫӗ. Пожарский рабочисен отрйачӗпе Ардатӑв уйесӗнчи йалсем тӑрӑх ҫулталӑкӗпех ҫӳревӗ, Совет республикине вырӑпа вӗлерме хӑтланнӑ кулаксенчен вӑл отрйад тырӑ турта-турта илнӗ.

1924 ҫулта парти укомӗн путовки тӑрӑх Пожарскине Улйанӑвскри совпартшкула йанӑ, унтан вӑл 1925 ҫулта вӗренсе тухнӑ.

Унтан вара комсомол тата парти ӗҫӗнче активлӑ ӗҫленӗ ҫулсем: ПСҪЛКС волком ҫекретарӗ, уком членӗ, укомӑн ревкомиссии председателӗ, Ардатӑв хула совет членӗ.

Хӗрлӗ Ҫарти службӑна Пожарский хӑйӗн пурнӑҫӗнчи чи интереслӗ тапхӑр тесе шутланӑ. Вӑл хӑйӗн пурнӑҫне Хӗрлӗ Ҫарпа ҫыхнӑ, хӑйӗн кунӗсем пӗтеччен вӑл унӑн воинӗ пулса йулнӑ.

Унӑн Хӗрлӗ Ҫарти ҫулӗ—политработниксен ҫулӗ. Курсант, взвод командирӗн помощникӗ, ПСК(б)П йачейкин ҫекретарӗ, комсомол бюровӗн ҫекретарӗ, парти бюровӗн ҫекретарӗ, ескадрон, баталљон комиссарӗ.

1936 ҫулта ҫамрӑк комиссар пӗрремӗш хут ҫапӑҫу вутне кӗнӗ. 1936 ҫулти мартӑн 25-мӗшӗнче Йапони провокатӑрӗсем пире штыкпа хыпаласа пӑхасшӑн пулнӑ. Винтовкӑсемпе, пулеметсемпе хӗҫпӑшаланнӑ йапон-манчжурсен отрйачӗ чикӗри 8-мӗш номӗрлӗ паллӑ районӗнче совет чикки урлӑ каҫса кӗнӗ. Пожарский комиссар пулса ӗҫлекен ескадрона Йапони захватчикӗсене совет ҫӗрӗ ҫинчен хӑваласа йама хушнӑ.

Ҫав ҫапӑҫура пирӗн ҫынсем хӑйулӑн ҫапӑҫнӑ. Герой-пограничник лейтенат Краскин ҫапӑҫура хӑйулисен вилӗмӗпе вилнӗ.

Комиссар Пожарский малти ретсенче пулнӑ. Вӑл сылтӑм флангран ҫапӑҫӑва йертсе пынӑ. Комиссар хӑйӗн примерӗпе хӑйӗн бойецӗсене геройла хӑйулӑ ӗҫсем тума чӗрӗ вӑй парса хавхалантарнӑ.

Ҫапӑҫу варринче Пожарский аманнӑ, анчах та ҫапӑҫу пӗтмесӗр вӑл стройран тухса кайман. Йапони провокатӑрӗсем кунта та пирӗн ҫарӑн вӑйне тутанса пӑхнӑ.

ССР Союзӗн Инҫет-Хӗвелтухӑҫ чиккисене сыхланӑ чухне сыхалӑхлӑ тата хӑйулӑ пулнӑшӑн, 1936 ҫулти апрелӗн 2-мӗшӗнче ССРС Тӗпӗҫтӑвкомӗ Иван Алексейӗвич Пожарскине—ескадрон военкомне—Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе награлланӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Пожарский йулташ Ленин йачӗпе тӑракан ҫар политикӗ шкулӗнче вӗреннӗ те, 1937 ҫулти август уйӑхӗнче ҫӗнӗ вӑйсемпе вӑйланса, пӗлӳсем илсе хӑйӗн чаҫне таврӑннӑ.

Бойецсем хӑйсен комиссарне ӑшшӑн кӗтсе илнӗ. Ӑна простӑ пулнӑшӑн, сисӗмлӗ, бољшевикла тӳрӗ пулнӑшӑн йуратса хисепленӗ. Пӗтӗм парти организацийӗ ӑна ҫавӑн пек ҫын тесе шутланӑ.

Вӑл баталљонри коммунистсене пӗтӗҫтернӗ, тӑшмансене пӗр хӑрамасӑр тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, вӗренӳри „комплекслӑ" тесе калакан тӑшманла метӑда хирӗҫ чи малтан вӑл кӗрешме пуҫланӑ. Епӗр ӑна соединенири йулашки партконференцинче куртӑмӑр. Тӑшмансен ирсӗр ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса вӗсем ҫинчен каланӑ чухне, унӑн сасси тарӑхупа йанранӑ.

Ӑна пӗлекен ӗҫри йулташӗсем, бойецсемпе командирсем ҫав ҫынӑн ӗҫри пултарулӑхӗнчен тӗлӗннӗ. Вӑл пур ҫӗрте те пулнӑ—стрелбищӑра тата витере, казармӑра тата столовӑйӗнче.

Занљатисене хатӗрлесе, вӑл ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе Ленинпа Сталин ӗҫӗсене вуласа ларнӑ. Вӑл баталљонри кашни ҫынна пӗлнӗ, курссене, командировкӑна кайнӑ бойецсем патне ҫырусем ҫырма вӑхӑт тупнӑ.

* * *

Вӑл кунсем уйрӑмах канӑҫсӑр пулнӑ. Йапони провокатӑрӗсем Хасан кӳлли районӗнче государствӑ чиккине пӑснӑ.

Чикӗри событисем ҫинчен пӗлсен, военком Пожарский коммунистсене пухрӗ. Йапони самурайӗсен бандитла ӗҫӗсем ҫинчен вӑл калама ҫук пысӑк тарӑхупа каларӗ. Военком, йаланхи пекех, кӗскен каларӗ, анчах коммунистсем, бойецсем, командирсем ӑна ӑнланчӗҫ. Хатӗр пулас пулать, иртӗнсе кайнӑ тӑшмана ӑс парас пулать.

Сасартӑках баталљон фронта каймасть, тесе пӗлтерчӗҫ. Пожарский, бойецсен шухӑш-кӑмӑлӗсем ҫинчен каласа парса, командованирен баталљона фронта йама тилмӗрсе ыйтнӑ.

...Ҫӗрле баталљон вӑрҫа кайма тухрӗ. Бойецсен умӗнче комиссар сӑмах тухса каларӗ. Вӗсем вӑл ҫакӑн пек пулнине нихҫан та курманчӗ. Комиссарӑн кашни сӑмахӗ чӗре патне пырса вырнаҫнӑ. Тӑшманпа хӑвӑртрах тӗл пулас та, совет ҫыннисен пӗтӗм тарӑхуне унӑн пуҫӗ ҫине йӑтӑнтарса антарас килнӗ.

...Бойецсем Пулеметнайа йатлӑ сопкӑна йышӑнма задачӑ илнӗ. Кӑнтӑрла тӳсме ҫук шӑрӑх тӑнӑ. Атакӑна кайнӑ. Атакӑ тӑвакансен умӗнче малта военком Пожарский пынӑ, унпа йунашар аслӑ лейтенат Попов, политрук заместителӗ Тимофей Йакӑвлӗв.

— Ех, ӑнӑҫлӑ пулчӗ санӑн, Йакӑвлӗв йулташ,—тенӗ Пожарский ҫапӑҫу умӗн политрук заместителне.

— Чӑнах та ӑнӑҫлӑ пулчӗ,—ответленӗ хумханнӑ Йакӑвлӗв.—Тин ҫеҫ курсран таврӑнтӑм та тӳрех ҫапӑҫӑва.

— Акӑ епӗ сана йапонӗцсене мӗнле хӗнемелине кӑтартӑп,—тенӗ комиссар.

— Есӗр ӗнтӗ вӗсене пӗр хут хӗненӗ.

Ҫапӑҫура Йакӑвлӗв хӑйӗн комиссарӗнчен йулман. Вӑл унӑн комиссарӗ ҫеҫ мар, вӑл унӑн тусӗ, чи ҫывӑх йулташӗ. Нумайах та пулмасть вӑл Йакӑвлӗва партине кӗме рекомендаци панӑ. Вӑл унӑн ученикӗ, воспитанникӗ.

— Малала, Сталиншӑн, тӑван ҫӗршывшӑн! — илтеҫҫӗ бойецсем комиссар чӗнӗвне.

Сопкӑ патне чупса ҫитнӗ те, канса илес тесе, канала выртнӑ. Умра тӑшманӑн вӑйлӑн тӗреклетнӗ персе тӑмали вырӑнӗ пулнӑ. Командир, комиссар—тӑшманӑн персе тӑмали вырӑнне ҫӗмӗрсе тӑкса Пулеметнайа сопкӑна тытса илме задачӑ лартнӑ.

Бойецсем ҫывхарса пынине сиссен йапонӗцсем канал ҫине вӑйлӑн персе тӑма пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтра персе тӑмали вырӑнтан Йапони офицерӗ чупса тухнӑ та, Тӳмен-Ула йуханшывӗ патнеле кайнӑ. Пожарский пӑшалтан персе йанӑ та пуљӑ тӗл тивнипе самурай ҫӗре тӑтӑлса аннӑ.

— Ман хыҫҫӑн, малала!

Военком, тӑшман ҫине гранатӑсем пере-пере, бойецсен цепӗ умӗнче малта чупнӑ. Пирӗн пулеметчиксем вӑйлӑн персе тӑнӑ. Тӑшман пулемечӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри пеме чарӑна-чарӑна ларнӑ.

Баталљонӑн сылтӑм флангне парти кандидачӗн Михаил Неуймин пулемет взводӗ хӳтлесе тӑнӑ. Вӑл—нумайранпа Пожарскийпе пӗр службара тӑнӑ. 1936 ҫулти мартӑн 25-мӗшӗнче унпа пӗрле ҫапӑҫура пулнӑ. Йапонӗцсем Хасан кӳлли ҫывӑхӗнче, Заозернайа высотан ҫурҫӗр йенчи сӗвекӗсем ҫине персе тӑнӑ. Неуймин взводӗнчи пулеметчиксем тӗл персе тивретсе йапонӗцсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Баталљон виҫӗ хутчен атакӑна тухнӑ. Пожарский йалнах малта пынӑ. Малтанхи атакӑ хыҫҫӑн комиссар аманнӑ.

Сурана ҫыхнӑ та, Пожарский атакӑна кайнӑ. Унӑн сасси малтанхи пекех шанчӑклӑ, малтанхи пекех тимлӗн йанранӑ.

— Малала!—чӗннӗ комиссар.—Тӑван ҫӗршывшӑн, тӑван Сталиншӑн!

Виҫҫӗмӗш атакӑра йапонӗцсен персе тӑракан вырӑнне йӗри-таврах хупӑрласа илнӗ те ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Ҫапӑҫура комиссар вилмелех аманнӑ. Ун патне бойецсем чупса пынӑ.

— Сывӑ пулӑр! — тесе сӑмах хушнӑ вӑл.—Тӑван ҫӗршывшӑн чыслӑн тӑрӑр!—Ҫак сӑмахсемпе вилнӗ.

— Комиссара вӗлерчӗҫ!—кӑшкӑрса йанӑ курсант Каданцӗв.

„Комиссара вӗлерчӗҫ!"—тени илтӗннӗ бойецсен ретӗсем тӑрӑх. Йапонӗцсем тарма хӑтланса пӑхнӑ, анчах Неуймин взводӗ вӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Тытӑҫу хире-хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫма пуҫласси патне ҫитсе тӑнӑ. Красноармейӗцсем, курсант Каданцӗв, отделени командирӗ Сељук, лейтенант Урицкий хӑйулӑн ҫапӑҫнӑ.

Йапони офицерӗ алла саблӗ тытса Урицкий лейтенат ҫине сиксе ӳкнӗ. Урицкий штыкпа унӑн карланкӑне чиксе шӑтарнӑ та штыкне туртса кӑларма та ӗлкӗреймен, хыҫалтан ун ҫине иккӗмӗш офицер хӑпарса ларнӑ. Самурайа ҫавӑнтах пистолетпа персе вӗлернӗ.

Хӑйсен йуратнӑ комиссарӗн вилӗмӗшӗн бойецсем тавӑрчӗҫ. Окопсенчен пӗр захватчик те тухса кайайман, вӗсене пурне те вӗлерсе тӑкнӑ. Пулеметнайа сопкӑна йышӑнса илнӗ.

...Ҫавӑн пек вилнӗ военком Пожарский—халӑх ывӑлӗ, шиксӗр воин-бољшевик. Вӑл чи хакли́не—пурнӑҫне тӑван ҫӗршывшӑн, Сталиншӑн, коммунисӑмшӑн панӑ.

Герой-комиссарӑн йачӗ ӗмӗрлӗхе асӑнмалӑх йулатӑр!

Епӗр Пожарский ҫинчен калани чухне, пирӗн умма граждӑн вӑрҫинчи комиссарӑн сӑнарӗ тухса тӑрать,—хӑйулӑ та шиксӗр бољшевик халӑха, хӑйӗн партине иксӗлми йуратакан пысӑк ирӗк-кӑмӑллӑ ҫын.

В. Хействер.

„Тревога"—Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Хӗрлӗ йалавлӑ фронтри красноармейӗцсен хаҫачӗ. № 187. 1938ҫ. августӑн 14-мӗш.

Парти пурнăçĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнче

Партине çĕнĕ членсем илесси мĕнле пыни çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ партине çĕнĕ членсем илесси мĕнле пыни çинчен ыйту пăхса тухса çакна палăртнă: парти организацисем, ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленум решенисене пурнăçа кĕртсе пынипе, партине çĕнĕ членсем илес ĕçе лайăхлатнă. Партине çĕнĕ членсем илме пуçланăран вара, урăхла — 1936 çулти нойабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1938 çулти июлĕн 1-мĕшне çитиччен Чăваш парторганизацинче парти кандидатне кĕме 614 çын зайавлени панă, вĕсенчен парти кандидатне 469 çын илнĕ, кандидатран члена 326 çынна куçарнă.

Партине илесси уйрăмах йулашки уйăхсенче вăйланчĕ. 1938 çулти йанвар уйăхĕнчен пуçласа июль уйăхне çитиччен парти кандидатне кĕме 486 зайавлени панă, вĕсенчен парти кандидатне 383 çын илнĕ, кунсăр пуçне кандидатран члена 215 çын куçарнă.

Çакăнпа пĕрлех, Обком уйрăм парторганизацисенче партине илес ĕç пачах çителĕксĕр тăнине палăртнă. Çавăн пек, Патăрйел организацинче йанвар уйăхĕнчен пуçласа июль уйăхне çитиччен пурĕ те 7 çын анчах партине илнĕ, Йĕпреç парторганизацинче—8, Шупашкар районĕнчи парторганизацинче—5, Йелчĕк организацинче—2.

Чылай райпарторганизацисенче партине илес ĕçре пысăк çитменлĕхсемех пур. Партине кĕме ыйтса панă зайавленисене вăраххăн пăхса тухаççĕ. Августăн 1-мĕшне пăхса тухмасăр йулнă зайавленисем 342 пулнă. ПСК(б)П Тĕпкомĕпе Обком йенчен темиçе хутчен кăтартса панă пулсан та, уйрăм парторганизацисем ку тарана çитсе те партине çĕнĕ членсем илес ĕçе тытăнман. Çав вăхăтрах, хăшпĕр ПСК(б)П райкомĕсем (Шупашкар хула комитечĕ, Канаш райкомĕ т. ыт.) çакăн пек пуçламĕш парторганизацисене ĕçре пулăшмаççĕ, парторганизацисен йышне малта пыракан, Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме пултарнине ĕçре кăтартнă рабочисемпе работницăсене, колхозниксемпе колхозницăсене, агрономсене, учителсене т. ыт. работниксене партине илнипе ÿстерес йенĕпе активлăн ĕçлемеççĕ.

Парти документсене вăхăтра парасси те кайа йулса пырать. 1938 çулти августăн 20-мĕшне парти кандидатне илнисене 98 çынна, кандидатран члена куçарнисене 49 çынна, партире хăвармала тунисене 31 çынна парти документсем паман. Парти документсем парасси уйрăмах Канаш парторганизацинче (унта 20 çынна паман), Сĕнтĕрвăрри (17 çынна паман), Шупашкар хули (28 çынна паман), Улатăр (14 çынна паман) организацисенче кайа йулса пырать.

Чылай парторганизацисенче кандидатсем хушшинче ĕçлесси начар тăрать: вĕсене партипе общĕстлĕ ĕçе çителĕклĕ таран хутшăнтармаççĕ, партилĕ-политикăлă воспитани парас йенĕпе йĕртсе пымаççĕ.

Кандидатран парти членне куçарас ĕç çине те чылай организацисенче пачах çителĕксĕр пăхаççĕ. Уйрăм парторганизацисенче партине илнĕ чухне устава пăхсем пулаççĕ. Иетĕрне, Шăхасан организацисенче материалсене райком решени пулнă хыççăн тин йĕркелеççĕ, пуçламĕш парторганизацисенче партине кĕме панă зайавленисене пăхса тухнă чухне рекомендаци паракансĕнчен пурĕш те пулмаççĕ (Канаш), партине кĕрес текенсене партине кĕме хатĕрлемеççĕ (Йетĕрне).

ПСК(б)П Обком партине çĕнĕ членсем илес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес шутпа, пур ПСК(б)П райкомĕсемпе Шупашкар хула комитетне пур пуçламĕш парторганизацисенче те ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 çулти июлĕн 14-мĕшĕнче партине çĕнĕ членсем илес ĕç мĕнле пыни çинчен йышăннă решенине сÿтсе-йавма парти пухувĕсем туса ирттерме; Тĕпком решенинче кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерсе партине илес ĕçе лайăхлатма кашни организаци тăрăх практикăлă майсем йышăнма хушнă.

Обкомăн йĕртсе пыракан парторгăнсен пайне—Йелчĕк, Шупашкар, Йĕпреç, Патăрйел райкомĕсем партине илес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тухма хушнă. Çаксемпе пĕрлех, Обком партине илес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тата ытти практикăлă ĕçсем туса ирттерме йышăннă.

Тутаркас райпарторганизацин пухăвĕ

МĂН СĔНТĔР. Çеңтаберĕн 5-мĕшĕнче Тутаркас парторганизацинче коммуниссен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕн ĕçĕсем çинчен ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕн—Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум председателĕн З. А. Андрейевă йулташ докладне итлесе сÿтсе-йаврĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ М. С. Кнаçĕв ССР Союзĕн Иккĕмĕш Çессси йышăннă саккунсем çинчен массăна ăнлантарса пама 27 çынран агит-коллектив организациленĕ.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем, сăмахран Муркашри пуçламĕш парторганизацин РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Советне суйланă хыççăн агитаци ĕçне пачах пăрахнă.

Суту-илÿ организацисенче сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтересси ытла та вăраххăн пырать.

Прениre тухса калакан йулташсем ССРС Верховнăй Совечĕ II-мĕш Çессси йышăннă саккунсене ырласа, районра политикăлă, хуçалăхлă, культурăлă ĕçсене вăйлатма кирлине кăтартса пачĕç.

Пуху пур парторганизацисене те Çессси йышăннă саккунсене йалсемпе колхозсенче ĕççыннисен массине анлăн ăнлантарса пама хушса хăварчĕ.

М. Исайĕв.

Стахановла çирĕмкунлăх пуçланчĕ

Чукунçул строительствин ĕçĕсене туса пĕтерес тĕлĕшпе социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса пырар!

Вокзал никĕсне срукчен туса пĕтеретпĕр

Пирĕн йуратнă ĕç вăл—каменщик ĕçĕ. Епĕр иксĕмĕр те каменщиксен курсĕнчен вĕренсе тухнă. Кăçал май уйăхĕнче Шупашкар станцинче ĕçлеме пуçларăмăр. Халĕхи вăхăтра вокзал никĕсне хыватпăр.

Малтанхи вăхăтра, курсран вĕренсе тухсанах, теори йенчен пĕлнĕ пулсан та, ĕç çыпçăнса пымастчĕ. Нормăна 60—80 процент çеç тултарса пынă. Малта пыракан стахановĕцсен опычĕпе паллашрăмăр, вĕсем мĕнле ĕçленине сăнаса вĕрентĕмĕр. Вара пирĕн те ĕç ăнăçса пыма пуçларĕ. Нормăна 200 процент йе ытларах та тултаракан пултăмăр. Çеңтаберĕн 1—2-мĕшĕсенче, самахран, 230 процент пурнăçа кĕртрĕмĕр.

Сталинла наркомăн Каганович йулташăн приказĕ пире çĕнĕ вăйпа хавхалантарчĕ: октаберĕн 1-мĕшĕнче чукунçула вăхăтлăх експлоатацине памала! Ку вăл ĕçлемесĕр пулмасть. Тăрăшни кирлĕ. Çавăнпа та епĕр хамăр звенора стахановла çирĕмкунлăха лайăх хатĕрлентĕмĕр. Ака çеңтаберĕн 7-мĕшĕнче епĕ, Кузнецов, хамăн вăйа тĕрĕслесе пăхрăм. Вăл кун, Потапăв йул. чирленĕ пирки, манăн пĕччене ĕçлеме тиврĕ. Çав кун епĕ пĕччен 15 кубла метр чул никĕс хывса нормăна 300 процент тултартăм. Çеңтаберĕн 8-мĕшĕнче сменăри нормăна 265 проц. тултартăмăр.

Мĕнле метăдпа ĕçлетпĕр епĕр? Чи малтанах ĕç кунĕпе туллин усă куратпăр. Кашни каменщик патне уйрăм рабочи çирĕплетнĕ. Вĕсем чулсемпе цемент шĕвекне вăхăтра илсе параççĕ. Каменщик строймариалшăн унта-кунта чупса çÿремест. Пĕр хайĕн ĕçне çеç пĕлет. Материалсем йаланах ал айĕнче.

Чи кирли—социалисăмлă ăмăрту пулса тăрать. Епĕр Вокзал тунă çĕрте ĕçлекенсем пурте ăмăртатпăр. Строймастăр Ольга Петровнă йалах рабочисемпе пĕрле. Вăл ĕçлеме вĕрентет. Ĕç пĕтнĕ хыççăнах результатсене шутласа пырать. Кăнна вăхăтра хаçатсем вуласа кăтартать.

12 каменщикĕн, вĕсем нормăна 100 процент тултарса пырсан, октаберĕн 1-мĕшчен вокзалăн цокольнăй етажне (никĕсне çĕрпе тан купаласа хăпартни) туса пĕтермеле. Епĕр, 6 каменщик-стахановĕц, нормăна 200—250 процент тултарса, çав заданине çеңтаберĕн 25-мĕш тĕлне пурнăçа кĕртме пултатпăр. Çак стахановла çирĕмкунлăхра нихăçанхинчен лайăхрах ĕçлеме сăмах паратпăр.

Каменщиксем: И. Н. Кузнецов, И. Н. Потапăв.

Димитров йачĕпе тăракан 5-6-мĕш номĕрлĕ шахтăри комсомолецсем („Красноармейскуголь", Донбасс) Ваçă Монойло електросварщик тата Мишă Гусаренко комсомолăн 20-мĕш уйавне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Ваççă Монойло 6 уйăх хушшинче 2,5 çуллăх нормăна, Мишă Гусаренко 5 уйăх хушшинче çулталăкри программăна 110 процент тултарнă.



ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ваçă Монойло (сулахайра) тата Мишă Гусаренко.

М. Бондаренко фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Тивĕçлипе хатĕрленмесĕр кĕтсе илчĕç

Пайан чукунçул строительствинче стахановла çирĕмкунлăх пуçланчĕ. Анчах Шупашкар станцинче çак çирĕмкунлăха тивĕçлипе хатĕрленмесĕр кĕтсе илчĕç.

Л. М. Каганович йулташ приказĕ тăрăх чукунçула октаберĕн 1-мĕшĕнче вăхăтлăх експлоатацине памала. Çак приказа пурнăçа кĕртес пулсан, чи малтанах Шупашкар станцинче водоснабжени строительствине тата електростанцине туса пĕтермеле. Унсăрăн чукунçулне експлоатацине пама пулмасть.

Водоснабжени строительствинче строймариалсем çителĕксĕр. Самахран, хăмасем, пĕренесем, пăтасем, хăйăр, хурçăран тунă шыв пăркисем чылай кирлĕ. Управленинчи снабжени пайĕн начальникĕ Филиппăв йулташ айăпĕпе вăл строймариалсене стахановла çирĕмкунлăх пуçланнă тĕле те хатĕрлесе хуман. Кунсăр пуçне 8.000 кубла метр тăпра чавса турттармала. Ĕç вăйĕ çитмен пирки çак ĕç те начар пырать.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ чукунçул строительствинче стахановла çирĕмкунлăх ирттересси çинчен постановлени йышăннăранпа пĕр ерне иртрĕ. Анчах участкă начальникĕ Розанăв, парторг Павлăв йулташсем тата рабочком ку тарана çитсе те постановленине участкăри рабочисем хушшинче сÿтсе-йавман. Обйектсенче, бригадăсенче те стахановла çирĕмкунлăхра мĕнле ĕç тумали çинчен, графиксем çинчен сÿтсе-йавман.

Шупашкар районĕнчен кашни кун 650 çын ĕçлемеле. Çеңтаберĕн 8-мĕшĕнче 176 çуран çын, 53 лаша çеç ĕçленĕ. Унсăр пуçне догăвăрпа ĕçлекенсем 21 çуран çын, лашапа ĕçлекенсем 13 çын. Колхозниксем догăвăрсăрах ĕçлеççĕ. Çак вăл ĕç вăйĕ татти-сыпписĕр улшăнса тăрасси патне илсе пырать. Колхозниксем 2—3 кун ĕçлеççĕ те, пăрахса кайаççĕ. Шупашкар райкомĕн, райĕçтăвкомĕн тата колхоз правленисен колхозниксене чукунçула туса пĕтериччĕнех догăвăрпа ĕçлеме пулăшмала.

Хальĕ ĕçлекен колхозниксем хушшинче те массăлă ĕçе туса пымаççĕ. Социалисăмлă ăмăртăва сарман, ăмăрту догăвăрĕсем туман. Çавăнпа ĕç тухăçлăхĕ ытла та пĕчĕккĕ. Нормă тăрăх 3 çуран çынăн тата 2 лашан çменăра 14 кубла метр тăпра чавса турттармала. Хаљ 6 çуран çын тата 2 лаша вăтамран 8 кубла метр çеç ĕçлеççĕ. Кунта ăмăрту сарса йарсан, стахановĕцсен лайăх опычĕсене кашни рабочи патне çитерсен, ĕç тухăçлăхĕ пысăккăн ÿсме пултарать. Инженерла-техникла работниксем йенчен ĕçлĕ пулăшу пани, массăлă ăнлантару ĕçне вăйлатни кирлĕ. Анчах станцинче профсойуз ĕçĕ те, комсомол ĕçĕ те куранмасть. Клуб йалан пекех хупă тăрать.

Шупашкар районĕнчи уйрăм колхозсем строительствăна пулăшас йенпе лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. „Молния" колхозран 5 лашапа 13 çуран çын, Сталин йачĕпе тăракан колхозран 4 лашапа 10 çуран çын ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе пĕрле культработниксем те ĕçе килнĕ. Ваçилйĕв (Сталин йачĕпе тăракан колхоз) тата Николайĕв („Кукшум" колхоз) культработниксем колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, Каганович йулташ приказĕ çинчен ăнлантараççĕ. Çеңтаберĕн 7—8-мĕшĕсенче Шупашкар районĕнчи колхозниксем патне 50-шар екземплăр районри хаçат килсе панă. Çак колхозсенчен пĕтĕм колхозсен пример илмеле.

Управленин, парткомăн тата постройкомăн ку участкăна çителĕклĕ пулăшу памала.

С. Константинăв.

Малтанхи кунах лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç

Строительствăра ĕç вăйĕ хутшăнсах пырать. Çеңтаберĕн 4-мĕшĕнче 3-мĕш участкăна Тăвай районĕнчен 23 çын, 5-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчен 5 çын килчĕç. Пурте вĕсем комсомолецсем. Малтанхи кунсенчех вĕсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Комсомолец Шидаков йулташ йĕртсе пыракан бригадă (бригадăра 5 çын) 6-мĕшĕнче канмали кун пулсан та ĕçе тухса паха тĕслĕхсем кăтартнă. Бригадă членĕсем пурте хаваслăн ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче кăçал Хĕрлĕ Çара каймали призывниксем уйрăмăнах паха примĕрсем кăтартаççĕ.

Анчах çакна калас пулать, 3-мĕш участкă руководителĕсем вĕсен хастарлăхне татах та çÿлерех çĕклесе, вĕсене йалан пулăшса пырас йенĕпе начар ĕçлеççĕ-ха Выртса тăмали хатĕрсене пайан куна та çителĕклĕ таран хатĕрлемен, хăшне-пĕрне хватер тупса паман.

Хаљ анчах ĕçлеме килекен рабочисем хăйсемпе çимели йапаласем сахал илсе килнĕ пирки, малтанхи кунсенчех укçа йенчен пулăшу ыйтаççĕ.

Виççĕмĕш участкăри рабочисен стахановла çирĕмкунлăхра хастарлăн ĕçлесе нихăçан пулман çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Бригадăпа бригадă, сменăпа сменă хушшинчи социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырать.

Хар. Лисин.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-ш пленумĕн решенине пурнăçа кĕртни çинчен

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн çекретарĕ Н. М. Шверник йулташ Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕнче 1938 çулта çеңтаберĕн 2-мĕшĕнче тунă доклад

— ПСК(б)П Тĕпкомĕн çекретарĕсем Л. М. Каганович, А. А. Андрейĕв йулташсем пулăшса тата йĕртсе пынипе Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн иртнĕ VI-мĕш пленумĕн историлĕ решенийĕ, — тесе калать Шверник йулташ, — совет профсойузĕсен большевикла ĕç программи пулса тăчĕ.

Докладчик профсойузсем хăйсен ĕçне Сталинла Конституцине пурнăçа кĕртни тăрăх сарăлса пыракан социалисăмлă демократисăм условисенче урăхлатса çĕнетни çинчен калать. Сталинла Конституцине ĕçе кĕртни халăх массин политикăлă активлăхне кашни кун çĕклет, вĕсене совет патриотисăмĕ шухăшĕпе, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-национализла тăрçисене курайми тăвас, вĕсене пĕтерессишĕн кĕрешес шухăшпа воспитани парать.

— Совет патриотисăмĕн хăватлă вăйне нумай пулмасть Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пулса иртнĕ ĕçсенче кăтартса панă. Унта, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче, Йапони войенщчинин хăйĕн провокацийлĕ ĕçĕсемпе Совет Сойузне вăрçа кĕртсе йама хăтланчĕ. Пирĕн большевиксен партийĕ, хамăрăн çулпуç тата учителĕ Сталин йулташ вĕрентсе çитĕнтернĕ совет халăхĕшĕн Йапони войенщчинин провокацийлĕ ĕçĕ ăнсăртран пулман, çав кунсенче совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне сыхлама хатĕр тăнине лайăх кăтартса пачĕ.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕн решенийĕпе хĕçпăшалланнă профсойузсем çĕршывăн пĕтĕм политикăлă пурнăçне, ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республиксен Верховнăй Совечĕсен суйлавне активлăн хутшăнчĕç.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕ хыççăн, профсойуз оргăнĕсен суйлавне ирттернĕ. Профсойуз членĕсем профсойуз аппарачĕнчен тăшманла елементсене, чиновниксене хăваласа кăларчĕç. Хапрăк-савăт тата вырăнти комитетсен составне 70 процент çĕнетнĕ. Профсойузсен Тĕп Комитечĕсен пленумĕсене 96 процент çĕнетнĕ.

— Профсойуз оргăнĕсемпе вĕсен руководителĕсен отчотне тепĕр хут ирттерни, вĕсен пĕтĕм ĕçне профсойуз членĕсен анлă масси контроль туса пымалла тунă. Çапла майпа, — тесе калать пленумра пулнисем алă çупнипе Шверник йулташ, — епĕр пĕтĕм хăйулăхпа пирĕн профсойуз оргăнĕсем сойуз членĕсен анлă массинчен уйăрăласа тăнине пĕтертĕмĕр тесе, калама пултаратпăр.

Профсойузăн çĕнĕ оргăнĕсем хăйсем тавра ирĕккĕн ĕçлекен пысăк актив пухрĕç. Социальнăй страховани совечĕсемсĕр пуçне, хапрăк-савăт комитечĕсемпе цех комитечĕсем çумĕнче ĕçукçи, культурăпа çутĕç, массăлă производствăлă ĕç, рабочи изобретательстви, ĕçе сыхлас, пурăнмали çуртйĕрпе йăла ыйтăвĕсем тăрăх ĕçлекен комиççисем тунă. 154 союзсен сведенийĕсем тăрăх çеç, çав комиççисен ĕçĕсене доброволец-активисем тăватă мĕлйун çын хутшăнса ĕçлет.

Профсойуз оргăнĕсен суйлавĕсем профсойузсен демократине анлăн сарнă тăрăх ирттерĕç. Çапла пулни те хелĕ те профсойуз демократине пĕснă тĕслĕхсем пур. Çапла, тĕслĕхрен, Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтра профсойузсен Тĕпкомĕ ирĕк панипех завком членĕнче тăман çынна завком председателĕ туса хунă. Хĕвелтухăçĕнчи хура металлурги промышленнăçĕнче ĕçлекенсен профсойузĕнче те профсойуз демократине пысăккăн пăснисем пулнă, çакна тума Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн орготделĕ ирĕк панă. Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн президиумĕ тивĕçлĕ сойузсен тĕпкомĕсене тунă йăнăшсене тÿрлетме хушнă.

Профсойузсем хăйсен социальнăй страховани ĕçне те лайăхлатрĕç, сойуз членĕсен нушисемшĕн тăрăшассине вăйлатрĕç. Ĕç условисене лайăхлатни, ĕççыннисен пурнăçне аванлатни рабочисемпе служащисем чирлессине чылай чакарчĕ. Професçилĕ сойуз оргăнĕсем ĕçе сыхласси çине пысăк тимлĕх хунă пулсан, çав çитĕнÿсем тата пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Шверник йулташ профсойузсен тĕпкомĕсен тата Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн пысăк çитменлĕхĕсем ПСК(б)П Тĕпкомĕн феврал—март уйăхĕсенчи пленумĕ техникăлă хăрушăсăрлăх правилисене пăхса тухасси çинчен панă кăтартăва пурнăçа кĕртменни пулать тесе, шутлать. 412 правиларан 1938 çулти июлĕн 1-мĕше тĕлне 200 правилине çеç ĕçе кĕртнĕ.

Шверник йулташ профсойузсем сойуз членĕсен культурăлă-йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе сахал ĕç тунă, тесе калать. Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕ профсойузсемпе хуçалăх оргăнĕсем хушшинче коллективлă догăвăрсем тăвасси çинчен йышăннă решенине пурнăçа кĕртмен.

— Коллективлă догăвăрăн чи кирлĕ пайĕ пулса тăраканĕсене—ĕçукçи ыйтăвĕсене çав тери пăтраштарса пĕтернĕ, коллективлă догăвăрсене тăвиччен малтан ĕç укçине организацилессине йĕркелемеле пулнă, тесе калать Шверник йулташ. Ĕçукçи тĕлĕшпе троцкисла-бухаринла бандă нумай сăтăр тунă, вĕсем профорганизацисем йенчен чăн-чăн контроль çуккипе усă курнă.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ тата профсойузсен тĕпкомĕсем ĕçукçи ыйтăвĕпе çине тăрса ĕçлеме тытăнчĕç. Ĕçукçи мĕнле тăнине тĕрĕсленĕ. Промышленнăçăн чылай отрăçлисем тăрăх уйрăмăн илсен, автомобиль, пирăвăр, авиаци, сĕт-çу, тăвар промышленнăçĕнче ĕçукçине йĕркелес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем туса хатĕрленĕ.

Профсойузсем Тĕп Советăн VI-мĕш пленумĕ хыççăн хăйсен культурăлă-массăлă ĕçне лайăхлатрĕç. Анчах вĕсем ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республиксен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхăтĕнче тунă ĕçсене çирĕплетмен. Хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçе питĕ çителĕксĕр организациленĕ. 1937 çулхи плана 50 процентран та сахал тултарнă.

Професçилĕ Сойузсен организацийĕсем оборонă тата тĕне хирĕçле пропагандă ĕçне питĕ сÿрĕккĕн туса пыраççĕ. Начар ĕçсенчен пĕри—профсойуз кадрĕсене çителĕксĕр воспитани пани пулать. Шверник йулташ Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн президиумĕ Тĕп Совет Пленумне пухассине вăрăма чăсинине, çакна пула VI-мĕш пленум йышăннине пăснине палăртать. Ку тарана çитсе те пур профсойуз организацисенче те хăйсем йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслессине майлаштарман.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕн решенисене пурнăçа кĕртни профсойузсен ĕçĕсене малашне лайăхлатма услови туса парать. Тĕп задачă халĕ—профсойуз ĕçне хутшăнтарнă актива вĕрентсе çитĕнтересси пулать.

— Профсойуз кадрĕсене большевикла воспитани парассине, — тесе калать Шверник йулташ, — шкулсемпе кружоксенче çеç татса пама çук, ку ĕçе кадрсене практикăлă ĕçре воспитани парассипе çыхăнтармала.

Хапрăк-савăт тата цех комитечĕсен Сойуз членĕсен пухăвĕсене час-часах пухмала, профсойуз ĕçĕнчи çитменлĕхсене анлăн критиклемеле, массăсем умĕнче пĕрмайах отчот тытмалла.

Шверник йулташ кăçалхи çула пурăнмали çуртйĕр строительствипе йăвăр промышленнăç предприйатийĕсем тăрăх çеç 726 мĕлйун тенкĕ ытла панине кăтартать. Анчах малтанхи çурçуллăхра 184 мĕлйун тенкĕпе çеç усă курнă. Пурăнмали çуртйĕрсен строительстви çакăн пек начар пынăшăн профсойуз организацийĕсем чылайах айăплă. Пурăнмали çуртйĕр строительстви планне тултарнине çирĕп контроль туни кирлĕ. Шверник йулташ „Борец" савăтра пурăнмали çуртйĕр строительствине контроль тăвакан бригадă хăй çине тăнипе рабочисем валли çурт тăвассине васкатни çинчен интереслă пример илсе кăтартать. Профсойузăн пурăнмали çуртйĕрпе йăла комиççисен çĕнĕ çуртсене, йаслĕсене хăвăрт, лайăх тата хитре тăвассишĕн кĕрешмеле. Рабочисем пурăнакан çуртсене хĕлле валли хатĕрлесси çине уйрăмăнах пысăк тимлĕх хумала.

Профсойуз организацисен суту-илÿ, пĕрле апатланас ĕçсене çирĕп контроль тумала, советлă суту-илÿ ĕçне, культурăлă суту-илÿ ĕçне организациleme, рабочисем пурăнакан районсенче, хапрăк-савăт çывăхĕнче магазинсем ытларах тума пулăшмала. Жуликсене, вăрăсене

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Августăн 28-мĕшпе çентаберĕн 7-мĕшĕ хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни

Центрти Китайра вăрçă ĕçĕсен тĕп вырăнĕ малтанхи пекех Йанцзы йуханшывĕн çыранĕ пулса тăрать. Çапăçусем тĕмиçе ерне хушши ĕнтĕ Йанцзы шывĕн икĕ хĕррипе те, Цзуцзйан хули патĕнче пыраççĕ.

Китайри вăрçă пуçланçанах Йапони çарĕсем вăрçă хатĕрĕсен техники тĕлĕшĕнчен китайĕçсенчен малта тăнă. Кунсăр пуçне, йапонĕçсем вĕлерекен газсемпе усă кураççĕ. Анчах Йапони захватчикĕсем Китай бойецĕсен вĕсене хирĕç хыттăн тăрса çапăçас ирĕкне, хастарлăхне хуçма пултараймаççĕ. Хальхи вăхăтра китайĕçсем сăрт-тусенче хăйсемшĕн лайăх вырăнсем йышăннă, вĕсем оборонă тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнаççĕ. Кунта çав сăртлă вырăнсем йапонĕçсене вăрçă техникипе усă курма вăйлăн чăрмантараççĕ.

Паллă, августăн 25-мĕшĕнче йапонĕçсем Йанцзы шывĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче „генеральнăй наступлени" пуçлани çинчен пĕлтернĕ. Çак наступленине икĕ йеннеле: Цзуцзйан хулинчен хĕвеланăçнеле тата кăнтăр йеннеле туса пынă. Хĕвеланăç йеннеле наступлени туса пынă чухне йапонĕçсем мĕн пурĕ те 20—25 километр çеç малала кайма пултарнă. Наступлени туса пынă чухне вĕсен пысăк çухатусем пулнă. Августăн 31-мĕшĕнче китайĕçсем çав участкăра наступлени туса, Жуйчан районĕнче йапонĕçсене калама çук хыттăн аркатнă, вĕсене йалтах кайала хăваласа йанă. Вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, йапонĕçсен кунта 4 пин çын пĕтнĕ. Хальхи вăхăтра Китай позицисем Жуйчанран хĕвеланăç йеннеле темиçе километрта вырнаçнă.

Жуйчан хулинчен кăнтăр йенчи те йапонĕçсем çитĕнÿсем тăвайман. Деань йатлă хуларан 30 километр çурçĕреле вĕсен наступленине чарса лартнă. Фронтăн çав участкинче пысăк çапăçусем пыраççĕ, вăл çапăçусенче йапонĕçсен пысăк çухатусем пулаççĕ.

Çапла вара йапонĕçсен çĕнĕ „генеральнăй наступленийĕ" арканса кайнă.

Йанцзы шывĕн çурçĕр çыранĕнче çапăçусем Тайху, Сусун, Цаньшань (Аньхуей провинцин хĕвеланăç пайĕ) хулисем патĕнче пыраççĕ. Августăн 27-мĕшĕнче Китай çарĕсем кунта йапонĕçсем кĕтмен хушăран контрнаступлени туса, Цаньшань тата Тайху хулине тытса илнĕ. Йапонĕçсем пысăк çухатусем туса, Аньцин патнеле (Аньхуей провинцин столици) кайала чакнă та, çав районтан çурçĕреле, хĕвеланăç йеннеле, Луань, Хошань йеннеле наступлени тума йышăннă. Чаоху кӳлли патĕнче йапонĕçсем 20 пин салтак пухнă пулсан та, вĕсем кунта 25—30 километр çеç малала кайма пултарнă.

Çурçĕр Китайра паттăр 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕ вăрçать, вăл Хуанхе шывĕ урлă каçма хăтланакан тата Хенань провинцин хĕвеланăç пайĕнче тата Шаньси провинцинче вăрçакан йапонĕçсене хирĕç калама çук хыттăн тăрса вăрçать. Йулашки икĕ уйăх хушшинче йапонĕçсен кунта 20 пин çынна йахăн пĕтнĕ.

Йапонĕçсен Йанцзы шывĕн çыранĕсем патĕнчи çапăçувĕ ăнманни Йапони çарĕн вăрçас пултарулăхĕ хăвăрттăн чакни çинчен калать. Йапони çарĕ Китай территорине малала кĕрсе пынă çĕрте пысăкран та пысăк йăвăрлăхсене тĕл пулать, пысăк çухатусем тăвать. Тепĕр йенчен Китай çарĕ хăйĕн тактикине лайăхлатса пырать тата хăйĕн пултарулăхне ӳстерсе пырать.

Вăрçă вăрăма тăсăлнă май (вăрăма тăсăлакан вăрçă Китай халăхĕн лозунгĕ пулса тăнă), Йапони умне пысăкран та пысăк йăвăрлăхсем тухса пыраççĕ. Ылттăн запасĕ унăн пĕтнĕ. Промышленнăç вăрçăн куллен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртме пултараймасть. Тылра вăрçă çине тарăхасси ӳссе пырать. Вăрçа илсе каймали çынсен хисепĕ пĕтсе пырать. 450 мĕлйун халăхлă, тем сарлакĕш сарăлса выртакан территорилĕ Китай вăрăм вăхăта тăсăлакан вăрçа тӳсме пултарать, вăл çав вăрçăра захватчиксене тĕппипех çĕнтерсе тăкма вăйсем хатĕрлет.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăçри фронтра пăлхавçăсемпе интервентсем Сиерра де Лос Кабальос патĕнче (Гандесăран çурçĕр хĕвелтухăç йеннеле) çентаберĕн 6-мĕшĕнче республиканĕçсем çине вăйлă атакă тунă. Фашиссен 164 бомбардировщикĕ тата питĕ нумай истребителĕсем кунĕпех республиканĕçсен позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ. Унтан, артиллерирен хыттăн персе тăнă хыççăн, фашиссен çуран çарĕ, танксен хӳттипе, атакă тунă.

Республиканĕçсем пăлхавçăсен атакисене пилĕк хутчен сирсе пăрахнă, пăлхавçăсен нумай салтакĕсем вилнĕ. Фашиссен икĕ батальйонне йăлтах потерсе тăкнă. Подкрепленисем килнĕ хыççăн, пăлхавçăсем çĕрĕпех атакăсем тунă, анчах республикă бойецĕсем паттăррăн тăрса вăрçнипе тăшман пĕр пусăм çĕр те тытса илеймен.

Çентаберĕн 7-мĕшĕнче Ебро шывĕ патĕнче хаяр çапăçусем пынă. Тĕмиçе хутчен атакă тунă хыççăн, пысăк çухатусем тӳссе, фашиссем Корбертан çурçĕр йенче икĕ высотана йышăннă.

(ТАСС).

Н. М. Шверник йулташ доклачĕ

(Й У Л А Ш К И)

нимĕн хĕрхенмесĕр тупса палăртмала, вĕсене магазинсемпе столовăйсенчен хăваласа кăлармала.

Государствăн Социальнăй страхованин 1938 çулти бюджетне Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 6.323.000.000 тенкĕлĕх çирĕплетнĕ. Çак пысăк укçана рабочисемпе служащисемшĕн чи кирлĕ ĕçе пăма палăртса хунă. Профсоюзсем çине кăçал хисеплĕ ĕç хунă — 1937 çултипе танаштарсан, ĕçсыннисемшĕн тăрăшассине малала лайăхлатмала, чирлекенсен хисепне 10—12 процент чакармала. Страховой делегатсем çĕршер пин çын чирленĕ рабочисем патне килĕсене, пульницăсене çӳреççĕ, вĕсене пăхассинĕ кирлĕ пулăшу парассине организацилеме пулăшаççĕ.

Молăтăв йулташ пуçарнипе Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕпе рабочисен, инженерсемпе техниклă работниксен тата служащисен ĕçукçи пайĕсем тунă. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет сĕнĕвĕ тăрăх, Сталин йачĕпе тăракан автосавăтра ĕç условипе ĕçукçине организацилеснине тĕплĕн сăнаса вĕренсен, çак савăтри коллективлă договăрăн пройектне туса çирĕплетнĕ. Договăр пройектне Економсовет йышăннă. Çак договăр тăрăх халăх хуçалăхĕн ытти отрăçлисен предприйатисенче коллективлă договăрсем тума тытăнма йурать. Çĕнĕ колдоговăр — вăл конкретлă хуçалăхлă политикăлă документ. Вăл рабочисемшĕн пите те ăнланмалла.

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕ хыççăн, профсоюзсем социалисăмлă ăмăртупа стаханăвла йухăма йертсе пырассине лайăхлатрĕç, анчах ку ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартман-ха. Хапрăк-савăт тата вырăнти комитетсен социалисăмлă ăмăртăва конкретлă организацилемелле, пайăнхи ударниксене ыран стаханăвĕçсен ретне тăма пулăшмала.

Профсоюзсен политикăлă-массăлă ĕçĕ çине куçса, Шверник йулташ клубсен ĕçĕ пысăк вырăн тăни, вĕсен Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕсен, большевиксен парти истории, большевисăм пропагандин центрĕсем пулмала, ĕçсыннисен политикăлă пĕлĕвне тата культурлăхне хăпартмала тенĕ. Профсоюз организацисен Осоавиахим организацийĕсемпе тăчă çыхăну тытмала, вĕсене Ворошилăв пек тĕл перекенсене, ПВХО значокĕсене илекенсене хатĕрлеме пулăшмала. Тĕне хирĕçле пропаганда ĕçне те лайăхлатмала. Профсоюз организацисен тĕне ĕненекенсене тĕн клас тăшманĕсемшĕн çеç усăлине, вăл капиталисăмлă çĕршывсенче ĕçсыннисене пусмăрлама пулăшни, тĕн социалисăма хирĕçли çинчен ăнлантарса памала.

Хăйĕн докладне пĕтерсе, Шверник йулташ çапла каларĕ:

— Хамăрăн ĕçсене хытă та тĕплĕн тĕрĕслер, пленум ĕçне большевикла туса пырар, профсоюзсен малашнехи ĕçне пирĕн умма хамăрăн большевикла парти, хамăрăн çулпуç, учитĕл Сталин йулташ лартнă задачăсене пурнăça кĕртмеле тăвар. (Тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ).

Генлейнăвĕçсем çĕнĕрен ирсĕр провокаци тунă

Чехословаки правительстви, Англипе Франци хĕснипе, генлейнăвĕçсене çĕнĕрен пысăк уступкăсем тунă пулин те, тĕпрен илсен вĕсен пур требованисене те йышăннă пулин те, Гитлĕр кăтартнипе генлейнăвĕçсем правительствăпа калаçусем тăвассине аркатмали майсем шыраççĕ.

Нумайах пулмасть Моравска Острава хулинче хĕçпăшалсем тултарнă пысăк склад тупнă, вăл хĕçпăшалсене Германирен илсе пырса тултарнă. Çак ĕç тĕлĕшпе 80 генлейнăвĕçа арĕсленĕ. Арĕслейин сăлтавĕсене „пĕлме тесе" хулана генлейнăвĕçсен парламент депутачĕсем виççĕн пынă. Депутатсем тĕрме çурчĕ патне çитсе тĕле генлейнăвĕçсем „демонстраци" тунă.

Вĕсем, депутатсем пынипе хавхаланса, тĕрме патне пырса, ăна çĕмĕрсе тăкма хăтланнă. Анчах полици площечĕте „демонстраци" тăвакансенчен тасатнă. Кунта генлейнăвĕçсен пĕр депутачĕ аманнă.

Генлейнăвĕçсем хăйсемех тунă провокацине усă курса, Чехословаки правительствине тата Англи советникне лорд Ренсимена Чехословаки правительствипе калаçу тума чарăнни çинчен пĕлтернĕ.

Ку тĕлĕшпе генлейнăвĕçсен партийĕ пĕлтернине ирсĕр провокаци шухăшĕпе çырнă.

Франци пичечĕ çапла палла тăвать: Чехословаки правительствипе генлейнăвĕçсем хушшинчи хутшăнусем йăвăрлăха кĕрсе пыраççĕ.. „Популер" хаçат çапла çырать: „Хальхи вăхăтра пĕтĕм Йевропă кунçулне ыйту умне лартнă. Демократилĕ аслă державăсем хăйсен сăмахне каласан, вĕсем хăйсене хăйсем çăлса хăварма, Йевропăна тата мире çăлса хăварма пултараççĕ".

Генлейнăвĕçсем çĕнĕрен провокаци тунă пирки Чехословакири лару-тăру тата ытларах çивĕчленсе çитнĕ. Чехословакири сарлака общественнăç правительства çĕнĕ уступкăсем тунишĕн хыттăн тарăхать. Фашисăма уступкăсем тунине хирĕçлесе пĕтĕм Чехословаки тăрăх митингсемпе демонстрацисен хумĕ хăватлăн сарăлса кайнă. Çавăн пекех Чехословаки халăхĕ Англипе Франци хĕснишĕн те тарăхать, мĕншĕн тесен вĕсем Чехословаки правительствине Гитлĕр умĕнче тата унăн генлейнла агентури умĕнче пĕтĕмĕшпех кайала чактарма тăрăшаççĕ.

(ТАСС).

Швейцари хĕвелтухăçри чиккисене тĕреклетет

ПАРИЖ, 7. „Ордр" хаçат Сен Морицран килнĕ телеграммăна пичетленĕ, унта Швейцари хăйĕн хĕвелтухăçĕнчи чиккисене çав тери пысăк васкавлăхпа тĕреклетсе пынине кăтартнă. Халиччен Швейцаришĕн Сен Готард районĕнче пĕтĕçсе тăракан фортсен çистеми те çителĕклĕ пулнă. Анчах та Германи Австрине туртса илнĕ хыççăн тата Берлинпа Рим хушшинче килĕшӳ тунă хыççăн Швейцарин генеральнăй штабĕ умне çĕнĕ проблемăсем тухса тăнă. Фашисла державăсене хĕвелтухăç Альпăсенчи çӳлĕ-сăртлă тӳремĕн çулĕсем (Енгадин тӳремĕ) илĕртсе тăраççĕ; вăрçă пулас пулсан вăл çулсем тăрăх Франци чиккисем патне çар сем куçарма пулать.

Швейцаринчи рабочисенчен нумайăшĕсем халĕ Енгадин, Жӳлйе, Малож тата Бернин таврашĕнче çĕнĕ фортсен строительствинче ĕçлеççĕ. Кунта артиллери пулать.

Австрири Гитлĕре хирĕçле выступленисем

ПАРИЖ, 7. Австрин Парижре тухса тăракан антифашисла хаçачĕсем Австри халăхĕн сарлака сийĕсем хушшинче гитлĕрла режимпа килĕшменни татти-сыппиcĕр ӳссе пынине палăртаççĕ. Йулашки вăхăтра Австрин хăшпĕр хулисенче, уйрăмăнах Венăра, Гитлĕра хирĕçле выступленисем час та час пулса пыраççĕ. Вăйланса пыракан експлоатацине тата пурнăç условийĕсем начарланса пынине хирĕç Австри рабочисен протесĕ анлăн сарăлса пырать. 35 пинрен пуçласа 40 пин рабочине çити ĕçлекен 18 пысăк предприйатинче кĕске вăхăтлă забастовкăсем пулса иртнĕ. Рабочисем ĕçукçине ӳстерме ыйтнă.

Çавăн пекех апат-çимĕç продукцисем çителĕксĕр пулнине тата вĕсен хакĕ ӳссе пынине хирĕç те протес йухăмĕ сарăлсах пырать.

Йулашки ернесем хушшинче Венă, Инсбрук, Грац, Ленц тата Виллах рынăкĕсенче килхуçи хĕрарăмĕсем рабочисемпе пĕрле Гитлĕра хирĕç массăлă демонстрацисем туса иртернĕ. Венă хулинчи Нашмаркт йатлă пысăк рынăкра демонстрантсем: „Австрине гитлĕрăвĕçсем килнĕ хыççăн пирĕн мĕн пур продуктăсем пĕтрĕç" тесе кăшкăрнă.

Австрири лару-тăру çинчен çырнинче „Эстеррейхише информационен" йатлă антифашисла бюллетен çапла çырать: „Австри халăхĕ хушшинче килĕшменлĕх тата тарăху татти-сыппиcĕр ӳссе пырать. „Кун пек малашне пулма пултараймасть", тесе каланине час та час илтме пулать, çав вăхăтрах çапла каланине час-часах гитлĕрла чиновниксен сăвăрĕсенчен те илтме пулать".

(ТАСС).

Мускав—Баку—Мускав маршрутпа 11 сехет те 51 минут хушшинче вĕçсе тухнă

Клавдийа Бережнайа летчицăн çĕнĕ чаплă вĕçевĕ

Граждăнла сывлăш флочĕн летчици Клавдийа Бережнайа çентаберĕн 7-мĕшĕнче Мускав—Баку—Мускав маршрутпа çĕнĕ чаплă вĕçев тунă. Хăвăрт вĕçекен „ПС—40" почтă самолечĕпе вăл 3.980 километрлă пĕтĕм хушăна 11 сехет те 51 минут хушшинче вĕçсе тухнă. Самолет çинче бортмеханик Измирйан йулташ тата бортрадист Хмеленко йулташ пулнă.

— Манăн йулашки вĕçев, — тенĕ Бережнайа йулташ ТАСС сотрудникне, — епĕ çавăн пек маршрутпа çентаберĕн 3-мĕшĕнче тунă вĕçевпе танлаштарсан, пĕрремĕш хут пуçласа йалтах çĕнĕ трассăпа иртсе пынă.

Мĕнле иртсе пынă пирĕн вĕçев?

Мускавран епĕр çентаберĕн 7-мĕшĕнче ирхине 5 сехет те 07 минутра вĕçсе тухрăмăр. Хирĕç вăйлă çил вĕрнĕ пулин те, самолет 3 сехет те 03 минутран Сталинграда ăнăçлăн анса ларнă. 50 минут иртсен епĕр Сталинградран вĕçсе тухрăмăр та, 12 сехет те 10 минутра Бакува çитрĕмĕр. Çапла вара, епĕр Мускавран Бакува çитиччен 6 сехет те 13 минут хушши вĕçнĕ, сехетри вăтам хăвăртлăх 320 километр пулнă.

Кайала епĕр пурĕ те 5 сехет те 38 минут хушшинче вĕçсе çитрĕмĕр. Епĕр йалавах 4.000 — 5.000 метр çӳллĕшре вĕçсе пынă. Бакуран пуçласа Мускава çитиччен сехетри хăвăртлăх 350 километр пулнă, хăшпĕр участкăсенче вăл 380 километра та çитнĕ.

Клавдийа Бережнайа пĕрремĕш хут пуçласа вĕçнĕ трассă хальхи трассăран 1 050 километр кĕскерех.

(ТАСС).

Пĕр йалтан 14 трактăрис

ЕЛĔК. Районра МТС организациленĕренпе Шĕмшеш йалĕнче трактăриссен йышĕ çулран-çулах ӳссе пырать. Малтанхи çул ку йалтан трактăрис пулма вĕренсе тухнисем 4 çын çеç пулнă. Халĕ пурĕ 14 трактăрис, вĕсенчен тăваттăшĕ трактăр бригадисен бригадирĕсем, иккĕшĕ учотчиксем пулса ĕçлеççĕ.

Трактăриссем пуйан та культурăлă пурăнаççĕ. Кăçалхи çул А. Зайцĕв, И. Пугачов тата М. Степанăв йулташсем пысăк та илемлĕ çĕнĕ пӳртсем лартрĕç, 5 çынăн велосипедсем пур.

Мих. Иванов.

Почтальйон Важорăв

Анат Сăнарти (Йетĕрне р-нĕ) „Çĕнĕ çул" колхозра пурĕ 84 хуçалăх. Вĕсене хаçат-журналла тăвассишĕн почтальйон Важорăв тăрăшса ĕçлерĕ. Халĕ „Çĕнĕ çул" колхоза пĕтĕмпе 135 екземпляр тĕрлĕрен хаçат-журналсем пырса тăраççĕ. Важорăв хăйĕн ĕçне йуратать. Хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерет. Колхозниксемпе йединоличниксене хаçатсем вуласа парать, ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен ăнлантарать.

В. Крылов.

ÇĔРПӲРЕ ПРИЗЫВ ИРТНĔ

Çентаберĕн 6-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнче Хĕрлĕ Çар призывĕн Комиççийĕ хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ. Çĕрпӳ районĕ Хĕрлĕ Çара, флота сывлăхлă тата хут авăн пĕлекен çамрăксене пачĕ.

— Кăçал призыва кĕнĕ çамрăксем, — тет призыв комиççинче ĕçленĕ доктăр Никитин йулташ, — ытти çулхи призывниксемпе танлаштарсан, пĕрер-икшер çул çамрăк. Анчах вĕсем Хĕрлĕ Çара кайма пурте йурăхлă. Пурте çитĕнсе çитнĕ. Ку ĕнтĕ Сталин йулташ пире телейлĕ те культурăлă пурнăç туса панинчен килнĕ.

Призыв Комиççийĕ 6 кун ĕçлерĕ. Çак вăхăтра районран нумай çамрăксем хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç. Призывник Фомин Йакăв 1917 çулта çуралнă. Вăл „Комбайн" колхозра бригадирта ĕçлет. Унăн килĕнче ĕçлеме пултаракан çук. Амăшĕ 58 çулта, йамăкĕ 13 çулта кăна. Призыв комиççийĕ, саккун кăтартнă тăрăх, Фомин йулташа льгота пама йышăнчĕ.

— Пирĕн çĕршыва çынна пысăккăн хаклаççĕ, — терĕ Фомин. — Çавăнпа ĕнтĕ, манăн анне пек çынсене хĕрхенсе, ывăлĕсене льгота парса Хĕрлĕ Çартан хăвараççĕ. Анчахепĕ Хĕрлĕ Çара кайасшăнах. Манăн телейлĕ çынсем хушшине тăрса, тăван çĕршыва тăшмансенчен сыхлас килет.

Фомин йулташăн ыйтуне комиççи хирĕçлемерĕ. Ăна çвйазиссен чаçне илчĕ. Унăн амăшĕпе йамăкĕ валли икĕ çуллăха пурнăçра кирлисем пурте хатĕр. Хăй вăл Хĕрлĕ Çара тухса кайаченех колхозра, бригадăра ĕçлеме пулчĕ.

Фомин Йакăв призыва пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ. Вăл хăйне общественлă ĕçре кăтартнă. Унăн бригади призыв пуçланиччен авăн çапса пĕтерчĕ, государствăна тыррă пĕтĕмпех парса татнă. Вăхăтра ырăш акса пĕтерчĕ, халĕ кĕрхи çĕртме тума пуçăннă.

Призыв комиççи ĕçленĕ вырăна призывниксемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕсем, йăмăкĕсемпе акăшĕсем, пичĕшĕсем, шăллĕсем нумай пычĕç. Вĕсем хăйсен ывăлĕсене тата тăванĕсене социалисăмлă çĕршыва тăшмансенчен сыхлама чĕререн пама хатĕррине кăтартса пачĕç.

Лĕпсер йалĕнчи призывник Çеменăв Николайпа пĕрле призыв комиççине 63 çулхи ашшĕ, 60 çулхи амăшĕ тата пичĕшĕ пычĕç.

— Ман ывăл, — тет ашшĕ — колхоз хирĕсен стаханăвцисенчен пĕри. Вăл хутла авăн пĕлет, сывлăхĕ те унăн çирĕп. Ман ывăл Хĕрлĕ Çара кайма тивĕçех. Ăна епĕ Хĕрлĕ Çара илме ыйтатăп.

Çеменăв чăн та сывлăхлă пулчĕ. Ăна призыв комиççийĕ кавалерине илчĕ.

Çавăн пекех призыв комиççине Çĕрпӳри ватă учитĕл — пенсионер Иванов пычĕ. Унăн кăçал икĕ ывăл Хĕрлĕ Çара каймала. Ивановпа арăмĕ ытла та ватă пирки, комиççи икĕ ывăлтан пĕрне хăйсене пулăшма Хĕрлĕ Çартан хăварма шутларĕ. Анчах Иван Иванăвич çакăнпа килĕшмерĕ. Вăл икĕ ывăлне те Хĕрлĕ Çара илме ыйтрĕ.

В. Цыпленкăв.

Çичĕ республик спартакиади

Чăваш республикĕ иккĕмĕш вырăн йышăннă

Çентаберĕн 4—6-мĕшĕсенче Хусанта çичĕ республик — Тутар, Чăваш, Мари, Башкир, Удмурт, Коми, Мордва республикĕсен спартакиади пулса иртрĕ. Спартакиадăна 280 физкультурник хутшăннă. Чăваш республикĕнчен 35 çын кайнă.

Арçынсемпе хĕрарăмсем 100 метр дистанцине ăмăртса чупнă. Çак дистанцине Мари республикĕнчен пынă Фавровский 11,6 секундра чупса тухнă. Хĕрарăмсенчен ку дистанцине Тутар республик представительници Панкова 13,2 секундра чупса тухнă.

Чупса пырса çӳлĕ сикес йенĕпе пĕрремĕш вырăна Колтыпина (Тутар АССР) йышăннă. Вăл пĕр метр та 45 сантиметр çӳле сикнĕ.

Тутар республик представительници Диаменко граната 73 метр та 21 сантиметр ывăтса пĕрремĕш вырăна тухнă.

Диск инçе пересси пе пĕрремĕш вырăна хĕрарăмсем хушшинче Тутар республик спортсменкисем йышăннă.

Арçынсен ушкăнĕсем хушшинче те йадро ывăтассипе Тутар республикĕ малти вырăна тухнă. Вĕсен представителĕ Глейзер йадрона 12 метр та 03 сантиметр ывăтнă.

Чупса пырса вăрăм сиксе Сигута (Чăваш АССР) пĕрремĕш вырăна тухнă. Унăн результачĕ 6 метр та 84 сантиметр.

400 метр дистанцине Фавровский 54,1 секундра чупса тухса малти вырăна тухнă.

Хĕрарăмсем 800 метр ăмăртса чупнă. Ку дистанцине М. Гушчина (Чăваш АССР) 2 минут та 25,4 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăна йышăннă.

5 пин метр дистанцине чупассипе Потапăв (Тутар АССР) пĕрремĕш вырăна, Бурашникăв (Чăваш АССР, иккĕмĕш вырăна тухнă.

Шывра ишессипе Чăваш республикĕн команди пĕрремĕш вырăна тухнă. Алла гранат тытса 50 метра Иванов 46,7 секундра ишсе тухнă.

Гушчина 500 метра 1 минут та 23,7 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăна йышăннă.

Гранат ывăтассипе хĕрарăмсенчен Панкова (Тутар АССР) пĕрремĕш вырăна, Гушчина (Чăваш АССР) иккĕмĕш вырăна тухнă.

Шывра брасс стилĕпе Андрейĕв (Чăваш АССР) 100 метра 1 минут та 30,4 секундра ишсе тухнă. Николайĕвă ирĕклĕ стилпе 100 метра 1 минут та 30,3 секундра ишсе тухнă, вĕсем иккĕш те пĕрремĕш вырăн йышăннă.

Шыва сикессипе малти вырăна Йуневскайа (Мари АССР), иккĕмĕш вырăна Сапожникăвă (Чăваш АССР) йышăннă.

Кросра Бурашникăв 10.000 метр дистанцине 36 минутра чупса тухнă. Вăл пĕрремĕш вырăн йышăннă. Хĕрарăмсем 2.000 метр дистанцине чупнă. Кунта та Чăваш АССР представительници Гушчина пĕрремĕш вырăна йышăннă. Унăн вăхăчĕ 7,02 минут.

Пирĕн республикрен кайнă стрелоксем Мари АССР представителĕсенчен 8 очко сахалрах илнĕ.

Спартакиадăра Чăваш республик команди: çăмăл атлетикăпа виççĕмĕш, шывра ишессипе пĕрремĕш, пăшалтан тĕл пересси пе иккĕмĕш, велосипедпа чупассипе 6-мĕш, шыва сикессипе 3-мĕш вырăнсене йышăннă. Спортăн пур тĕрлĕ вăййисене пĕрле илсен, Мари АССР команди 1-мĕш вырăна, Чăваш республик команди 2-мĕш вырăна, Тутар республикĕ 3-мĕш вырăна тухнă.

Калас пулать, Чăваш республикĕнче физкультурă йухăмĕ çултан çул сарăлса пырать. Пирĕн республик физкультурникĕсемпе спортсменĕсем çултан çулах мала тухса пыраççĕ. Бурашникăв, Гушчина, Иванов, Николайĕвă, Филичкина, Андрейĕв, Сапожникăв йулташсем 7 республик спартакиадинче Чăваш республик йатне çӳле çĕклерĕç. Вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе республик командине малти вырăнсенчен пĕрне йышăнма нумай пулăшрĕç. Çакна та палăртмала, спартакиадăна хутшăннă 7 республик хушшинче Чăваш республикĕ ГТО значокĕ илме нормă парассипе чи малти вырăнта тăрать.

Анчах, тунă çитĕнӳсем чылай пысăк пулин те, пирĕн республикре физкультурăпа спорт ĕçне организацилес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Спартакиадăра туйăннă опытпа усă курса, физкультурăпа спорт ĕçне анлăн сармала, ăна çамрăксен массăлă йухăмĕ туса хумала.

Теплоелектроцентраль ĕçе кĕрес умĕн

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтри теплоелектроцентраль строительствинче монтаж ĕçĕсене вĕçлесе çитереççĕ.

Çентаберĕн 12-мĕшĕнче теплоелектроцентрале малтанхи хут сăнавлăн ĕçлеттерме пуçламала.

Теплоелектроцентрале ĕçе йанă вăхăтра тата унпа лайăх усă курма пуçличчен ĕçлеме, савăт Мускавран инженерсем — теплотехник-електриксем чĕннĕ.

Теплоелектроцентрале ĕçе йани — сăтăрçăсен ирсĕр ĕçĕсене витĕмлĕ ответ пани пулать, çав сăтăрçăсем савăт строительствинче нумай вăхăт хушши сийен туса пурăннă.

Строительсен тата савăтри рабочисен коллективĕ сăтăрлăх йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе татăклăн кĕрешет.

Теплоелектроцентрале ĕçе йани — вагонниксен чаплă çĕнтерĕвĕ шутланать.

В. Ласточкин.

Пулни-иртнисем

Çимульантсем. Августăн 21-мĕшĕнче Чеборгăн 19-мĕш №-лĕ ларйок пуçлăхĕ М. Прийаткина тата ларйокри продавщица П. Йаргина милици управленине пырса, каçхине вĕсен ларйокне çаратни çинчен пĕлтернĕ. Çавăн пекех августăн 27-мĕшĕнче те вĕсем милици управленине пырса çав ларйока иккĕмĕш хут çаратни çинчен пĕлтернĕ. Милици управленийĕ çак ĕçе тĕрĕслесе пăхсан, ларйокра нимĕнле çарату та пулманнине палăртнă. Хăйсем 5.000 тенкĕ растратă тунине витсе хурас шутпа вĕсем, ларйока çаратса кайнă тесе йурийех суйнă. Вĕсене халĕ иккĕшне те арĕслесе суда панă.

Ответлă редактăр
Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Ертел членĕсен пухăвĕ йышăннă тăрăх, Шупашкарти кооперативлă транспартлă „ВОЛГАРЬ" ертел

п ĕ т е т

Организацисемпе уйрăм çынсем икĕ ерне иртиччен претензисем пама пултараççĕ. Çак срук иртнĕ хыççăн претензисем йышăнмаççĕ.

Ликвидком.

„Чăваш Коммунĕ" сыранса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., султалăка 30 тенкĕ. Подпискăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 476. Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, ф. 6. 58×84 п. л.

15